ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

17 (4431) №, 2015, апрель (ака), 23
(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇИТĔНӲ

## Çутă ĕмĕт пурнăçланчĕ, Чун-чĕре те хăпартланчĕ

**Вăрнар районĕнчи Калинино шкулĕн Анатолий Иванович Григорьев ячĕпе хисепленекен кадет класĕ Мускавран çĕнтерӳпе таврăнчĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 70 çул çитнине халаллană «Стройпа юрă смотрĕ. Çĕнтерӳçĕсен маршĕ» хулари 9-мĕш хут иртекен ăмăртура вуникĕ команда хушшинче 1-мĕш вырăна тухрĕç «Çăлтăрсем».**



Паянхи кадетсемшĕн пысăкран та пысăк ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ. Ара, 2012 çулта, улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне, аслă ушкăнри «Патриот» кадечĕсем Мускавран çĕнтерӳпе таврăннăччĕ. Çав вăхăтра вĕсен куçĕсем те çăлтăр евĕр çуталнăччĕ. Çамрăксем çиччĕмĕш класа куçсан шкул директорне ыйту хыççăн ыйту пама пуçлană.

– Татьяна Павловна, эпир те Мускава çитсе хамăр пултарулăха тĕрĕслеме пултарайăпăр-и? – тенĕ пĕри те тепри.

– Çĕнтерӳ картлашки çине улăхиччен чылай вăй хумалла. Лайăх вĕренмелле, спорта юратмалла. Тата нумай-нумай хутчен репетици ирттермелле, – ăнлантарнă педагог.

Директор сăмахне пуçрах тытнă çамрăксем. Мĕн пултарнă таран тăрăшнă. Çине тăрса, малашлăхра çитĕнӳсем тума тĕллев лартса уроксем хыççăн юлса репетици ирттернĕ. Стройпа утнă, пăшал сӳтсе пуçтарнă, Тăван çĕршыв историпе çыхăннă тĕрлĕ ыйтăва хуравлană, бал ташши ташлană...

2014 çул, апрелĕн 5-мĕшĕ. «Çăлтăрсем» Мускавра пурăнакан «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» организаци ертӳçисем Çĕнĕ Шупашкарта ирттернĕ кадет ăмăртăвне хутшăннă, пĕрремĕш вырăна çĕнсе илнĕ. Çакă хĕрачасемпе арçын ачасене çунат хуштарнă. Çӳл тӳпенех вĕçме хатĕр пулнă вĕсем.

– Апла, Мускава çитетпĕрех! – хăпартланнă хайхискерсем.

2015 çул, апрелĕн 18-мĕшĕ. Мускаври пĕртăван Знаменскисен Олимп центрĕ. Хĕрӳ ăмăртура палăрнă Калинино шкулĕн кадечĕсене пурте саламласа малашнехи пурнăçра тата та çитĕнӳсем сунчĕç.

– Хама илес пулсан, эпĕ калама çук телейлĕ! Унччен десантник класĕнче вĕреннĕскер кадетсен ретне тăрассишĕн ăшчикĕм çунма тытăнчĕ. Хăюлăх çитерсе директор пӳлĕмне кĕрсе хам шухăша пĕлтертĕм. «Татьяна Павловна, тархасшăн, çутă ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртме ирĕк парсамăр», – терĕм. Вăл хирĕçлеменни чуна хăпартлантарчĕ... Халĕ эпир – çĕнтерӳçĕсем! Пире çак шая çитме пулăшнă педагогсене çĕре çити пуç тайса ырă кун-çул сунатпăр,– хăпартланчĕ хастар командир Катя Судова.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Шупашкар – Калинино – Мускав.

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсем.**

***(Ăмăрту пирки вара тĕплĕнрех çитес номерте каласа парăпăр.)***

ÇЫРĂНТАРУ ХЫПАР 2015

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн Раççей почтин мĕнпур уйрăмĕнче çырăнтараççĕ




Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Чăваш пичечĕ», «Советская Чувашия» киоскĕсенче тата редакцире çырăнма пулать

*Çырăнтару вĕçлениччен вăхăт нумаях юлмарĕ. Хăвăр юратнă «Тантăш» хаçатпа, «Тетте», «Самант» журналсемпех пулма тăрăшăр. Укçа нихăçан та çитмест, чун апачĕсĕр вара пурăнма питех те йывăр. Çырăнăр, вулăр, пирĕнпе туслă пулăр!*

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл



## Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе саламлатăп сире, хаклă ентешĕмĕрсем!

Чăваш наци конгресĕ тĕп ĕçсене чăваш чĕлхи тавра йĕркелесе пырать. Ку енĕпе пире вăй хума Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» калакан саккун пулăшать. Вăл чи малтанах тăван чĕлхене юратас тата упраса хăварас тивĕçе аса илтерет, ытти халăхсен чĕлхине хисеплеме вĕрентет.

Пирĕн республикăра чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе танах патшалăх чĕлхи шутланать. Çак ырă пулăм тăван чĕлхен тивĕçĕпе пĕлтерĕшне ӳстерме майсем парать. Кунта ĕçлемелли пайтах.

Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В. Иванов çулталăкне ирттерме палăртнине эпир ырлатпăр. Чăвашсем йышлă пурăнакан регионсене К.В. Иванов çуралнăранпа 125 çул çитнин уявне тивĕçлĕ шайра ирттерме пулăшасси çинчен пĕлтеретпĕр.

Кашниех хăй вырăнĕнче тата тăван халăхшăн тăрăшакансемпе алла-аллăн тытăнса вăй хурсассăн тин чăваш чĕлхин шăпине лайăхлатма пулать. Пĕтĕмпех хамăртан килет. Çак арпашуллă тĕнче кисренĕвĕнче тăван чĕлхемĕрĕн пĕлтерĕшĕпе сумне ӳстерме тата упраса хăварма май килнĕ таран вăй-хал тупасчĕ.

Тăван чĕлхе çынсене пĕрлĕх туйăмĕ парсах тăтăр, наци культурин аталанăвне паха витĕм кӳтĕр. Пуян та çепĕç чĕлхен халăха пĕрлештерекен вăйĕ ӳссех пытăр.

Чăваш чĕлхи кунне эпир И.Я. Яковлев çуралнă кун, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче паллă тăватпăр. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв ячĕпе пурне те тулли кăмăлпа саламлатăп, çамрăк ăрăва ăс-хакăл пама сирĕн чун хавалĕ тата нумай-нумай çула пытăр. Пултарулăхпа çирĕп сывлăх ан иксĕлччĕр. Чăвашлăха çирĕплетес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума чăтăмлăх, тăван чĕлхешĕн тăрăшма вăй-хал сунатăп.

***Н.Ф. УГАСЛОВ,***
***Чăваш наци конгресĕн Президенчĕ.***

**ТАНТĂШСЕМ**

## «Хĕрачасем те хоккейла выляççĕ!»

«Чăн-чăн арçынсем çеç хоккейла выляççĕ. Хăравçă хоккейла вылямасть!» – паллă юрăри çак йĕркесене кашниех пĕлет пуль. Чăнах та пурте коньки çине тăрса, алла клюшка тытса çиçĕмле хăвăртлăхпа шайба хыççăн чупма пултараймаççĕ çав. Хăюллисем тата харсăррисем çеç парăнтараççĕ çак вăййа.

Хоккей тесен куç умне тӳрех пăр çине пĕрин хыççăн тепри мăнаçлăн ярăнса тухакан каччăсене, арçынсене тата арçын ачасене кăларатпăр. Хĕрачасем те выляма пултараççĕ-ши ку кăткăс вăййа? Паллах! Тĕлĕнмелле çирĕп чунлă, хăюллă та хастар хоккеисткăпа паллашас килет-и? Эпир ăна Вăрнарта иртекен «Шанчăк» хоккей турнирĕнче тĕлпултăмăр.



– Пĕрремĕш хут коньки çине пилĕк çулта тăтăм. Эх, мĕнле телейлĕччĕ эпĕ ун чухне! Вĕçсе кайма хатĕрччĕ. Кăштах шиклентĕм те паллах. Анчах ярăнма вĕренес туртăм ку туйăма çĕнтерчех, – каласа пачĕ Çĕмĕрле районĕнчи Хутар шкулĕнче вĕренекен Настя Данилова вăйă таймĕ вĕçленсен пăр лаптăкĕнчен ярăнса тухсан.

Вăл «Сапсан» командăра кĕçĕн ушкăнра выляса район чысне ялан хӳтĕлет. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ хоккей вăййин ăсталăхне туптать.

Арçын ачасем ялти катокра хĕрсе кайсах хоккейла вылянине курнă хыççăн Настя канăçне çухатнă. Епле пулсан та вĕсен хаваслă ушкăнне лекме шут тытнă. Тĕллевĕсене пурнăçлама хăнăхнăскер нумай шухăшласа тăмасăрах пăр çине çӳреме пуçланă. Малтан ыттисем вылянине киленсе пăхса ларнă, кайран, ашшĕпе амăшĕ конькипе клюшка туянса парсан, хăй те арçын ачасемпе тан шайба хыççăн вирхĕнсе чупнă.

– Хĕрачасем те хоккейла выляма пултараççĕ! – терĕ Настя çирĕппĕн. – Хальлĕхе командăра эпĕ çеç. Тен, кайран тата тупăнĕç-и? Манăн тантăш та хоккейла выляма пуçласшăнччĕ, анчах ашшĕпе амăшĕ хирĕç пулчĕç. Ара, вăйă вăхăтĕнче е ăмăртăва хатĕрленнĕ чухне аманма та пулать-çке. Аслă класра вĕренекен Данил пичче маншăн пăшăрханать: «Хоккейла выляма пăрах. Тем siksе тухĕ тата», – тет тăтăшах. Мана вара нимĕн те шиклентермест. Пирĕн ушкăн малашне те тĕрлĕ ăмăртура тупăшĕ! Паян та Вăрнарти «Кристалл» командăна 4:1 шутпа çĕнтертĕмĕр! – пытармарĕ савăнăçне Настя.

Хĕрачашăн хоккей чун киленĕçĕ вырăнĕнчех. Çавăнпах пуль вăл малашлăха унпа çыхăнтарасшăн. «Шанчăк» турнирта çĕнтернĕ хыççăн Чулхулана çул тытĕç «Сапсансем». Унта мала тухасси – Настьăн пысăк ĕмĕчĕ. Ара, Чулхулари хоккей турнирĕн финалĕнче çĕнтерсен малалла Турцие выляма каймалла пулать-çке!

Настьăн хăюлăхĕнчен тĕлĕнмелли çеç юлать. Вăрнарта хоккей сезонĕ хупăннă ятпа иртнĕ ăмăртура та палăрчĕ вăл. «Чи лайăх вăйăçă» ята, кубокпа диплома тивĕçрĕ. Маттур!

***Нина ЦАРЫГИНА.***

## Чун уççи



«Лаша пуласси тихаран паллă», – теççĕ ваттисем. Ăçтан çавăн пек тĕрĕс калама пĕлнĕ-ши? Хăш-пĕр ачана ашшĕ-амăшĕ пĕчĕкренех юрăçă, ташăçă тăвас тесе çитĕнтерет. Теприне: «Эсĕ ертӳçех пулатăн», – тет. Шупашкарти 10-мĕш шкулта улттăмĕш класра вĕренекен Миша Павлов та çитĕнсен кам пуласси паллă ĕнтĕ. Вăл иккĕмĕш класранпа купăс лайăх калать.

– Миша маншăн сылтăм алă вырăнĕнчех. Класра чи маттуррисенчен пĕри вăл. Купăс питĕ хитре калать. Пĕрремĕш класранах фольклор кружокне çӳрет. Пур мероприяти те купăс сассипе тулать. Хам класс ертӳçи пулнăран Мишăн ашшĕпе амăшне тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем питĕ туслă пурăнаççĕ, пур ĕçе кар тăрса пĕрле тăваççĕ, – мăнаçланса каласа парать Марина Ильинична Архипова.

– Купăс – манăн чун уççи. Сăвăсем те хушăран çыркалатăп. Халĕ мана кура пĕрремĕш класри Кирилл шăллăм та купăс калама вĕренсе пырать. Иксĕмĕр те «Эревет» инструмент ансамблне çӳретпĕр, – тет маттур Миша.

Нумаях пулмасть Трактор тăвакансен Культура керменĕнче «Сувар» ташă ушкăнĕн концерчĕ пулчĕ. Унта «Эревет» ушкăн та пысăк сцена çинчен хăйĕн юррисемпе тыткăнларĕ куракана. Малашне те савăнтарĕç-ха пире вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче кăларнă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
К.БАЙБАТОРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1804 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1517
Пичете апрель уйăхĕн 22-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантӑш 3
17 №, 2015, апрель, 23

# «ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ» акци




Пирĕн район шкулĕсенче те ытти çĕрти пекех Аслă Çĕнтерӳ 70 çул çитнине халалласа «Çĕнтерӳ Ялавĕ» акци пуçланчĕ.

Иртнĕ эрнере шкула Мăн Марка ялĕнче çуралса ӳснĕ Геннадий Александрович Викторов запасри подполковник килсе çитрĕ.

Вăл саккăрмĕш класра вĕренекенсене Çĕнтерӳ Ялавне тыттарчĕ. Геннадий Александрович ялавăн пĕлтерĕшĕ çинче чарăнса тăчĕ. Энтеш пирĕн шкулта часчасах пулать, çамрăк ăрупа курнăçса паттăрлăх урокĕсем ирттерет. Хăйĕн пурнăçĕпе те паллаштарать.

Геннадий Александрович тăван шкултан вĕренсе тухсан Мускавра экономикăпа статистика институтĕнче хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстернĕ. Пилĕк çул вĕреннĕ хыççăн лейтенант звани панă. Кайран вăл инçетри Камчаткăна ĕçлеме кайнă. Инженер-программист çар тивĕçне пурнăçланă май Мускав облаçĕнчи пĕр хулара космос аппарачĕсен управленийĕн центрĕнче ăслăлăх ĕçченĕнче тăрăшать, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен аслă инженер-сăнавçăра вăй хурать. Шкула вăл нихăçан та пушă алăпа килмест. Хальхинче те вĕренекенсене пилĕк кĕнеке тата плакатсен пуххине парнелерĕ. Çамрăксемпе тусă çыхăну тытнишĕн шкул директорĕ Наталья Валерьевна Кольцова çар çыннине тата хамăр энтеше Тав хучĕ парса чысларĕ.

Шкул ачисем кунĕпех Çĕнтерӳ Ялавĕ умĕнче хисеплĕ хуралта тăчĕç. Çав вăхăтрах вырăс чĕлхипе литература эрни пыратчĕ. Сăвă вулакансен конкурсне хутшăнакансем хайлавсене Ялав умĕнче хавхаланса вуларĕç. Çакă мероприяти пĕлтерĕшне татах та ӳстерчĕ.

Линейка хыççăн офицер аслă класенче вĕренекенсемпе тĕл пулса Тăван çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисене çирĕп сывлăхлă çитĕнмеллине аса илтерчĕ, тăрăшса вĕренме сĕнчĕ. Вуннăмĕш класс ачисен ертӳçи хаклă хăнана пурин ячĕпе те тав турĕ, малашне те килсе çӳреме ырă сунчĕ.

Юлашкинчен йышпа пĕрле Çĕнтерӳ Ялавĕ умĕнче сăн ӳкерĕнтĕмĕр.

*Екатерина ГРИГОРЬЕВА,*
*вĕрентекен.*

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** Çĕнтерӳ Ялавĕ умĕнче.

# Паттăрсем пулса çитĕнесшĕн




Тăван çĕршыва юратасси мĕн ачаран пуçланмалла. Çакна пирĕн йышра яланах асра тытма тăрăшаççĕ. Шкулти Çар Мухтавĕн музейне иртнĕ çул йĕркеленĕ, унта ачасем тăтăшах пулаççĕ, хăнасем те килсе çӳреççĕ.

Çав кун юнармеецсен ушкăнĕ Çар Мухтавĕн ялавне зала чыслăн йăтса кĕчĕ. Шкул директорĕ М.Н.Николаева пирĕн халăх ирсĕр тăшмана çĕнтерсе тăнăç пурнăçшăн кар тăрса кĕрешни пирки каларĕ. Çĕнтерӳçĕ халăха ялан хисеплемеллине, паттăр вилĕмĕпе пуç хунисене ĕмĕр-ĕмĕр асра тытмаллине аса илтерчĕ. Улттăмĕш «а» класра вĕренекен Лиза Сидорова пурин умĕнче те хăйĕн мăн асламăшĕ Матрена Антоновна çинчен çырнă хайлава вуласа пачĕ. Пĕтĕм шкул ачи пурте пĕрле «День Победы» юрра хавхаланса юрларĕ. Кунĕпех шкул ачисем Ялав умĕнчен татăлма пĕлмерĕç, хисеплĕ хурал тăчĕç.

*Альбина ТИМОФЕЕВА,*
*вĕрентекен.*

Шупашкар,
28-мĕш шкул.

# Кадетсем ялан маттур

Етĕрнери 3-мĕш шкулти 5 «б» кадет класĕнче вĕренекенсем пĕри тепринчен хастартарах. Женя Анчиков, Дарья Баталина, Ангелина Артемьева, Евгений Токарев тата Максим Скобелев вĕренӳре малтисен ретĕнче, «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пыраççĕ. Ыттисем вара – ударниксем. Район тата республика ăмăртăвĕсенче те тăтăшах палараççĕ вĕсем. Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистсене çĕнтернĕренпе 70 çул çитсе пынине халалланă стройпа юрă тĕрĕслевĕн «Сăр тăрăхĕнчи кадетсем» хула конкурсĕнче çĕнтернĕ «Юнга» кадет класĕ. Раççейри интернационалист-салтаксене асăнмалли куна халалланă çамрăк армеецсен тĕрĕслевконкурсĕнче вара иккĕмĕш вырăна тухнă. Маттур ачасем районти çар юррин «Çĕнтерӳ хумĕсемпе» конкурсĕнче каллех малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă. Ушкăна çĕнтерӳ патне ăнтăлма вĕрентсе çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума хавхалантаракан класс ертӳçине Надежда Константиновна Баталинăна чыс та мухтав!

*Илья КЛОЧКОВ.*

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**




# Кăсăклă куравра



Апрелĕн 16-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта «Ачасене – Аслă Çĕнтерӳ çинчен» соцпроектпа килĕшӳллĕн çитнĕ ӳкерчĕксемпе экскурси иртрĕ. Унта 4 «а» класс вĕренекенĕсем тата «Пилеш» ача сачĕн хатĕрленӳ ушкăнне çӳрекенсем хутшăнчĕç.

Ӳкерчĕксен куравĕ пĕр кун маларах уçăлнă. Çак мероприятие хисеплĕ хăнасем килсе çитнĕ: «Вăрçă ачисем» обществăлла организаци ертӳçи С.Е.Баринов тата Хĕрлĕ Чутай ял тăрăхĕн хастарçи З.М.Самылкина, Хĕрлĕ Чутайри Воздвижени храмĕн настоятелĕ Максим атте.

Хĕрлĕ Чутай шкулĕнче ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви тата «Халăх шкулĕ» хаçат редакцийĕ йĕркеленĕ «Чăваш Ен» сăнӳкерчĕксен куравĕ иртрĕ. Шкул ачисем çеç мар, аслисем те ĕçсемпе кăсăкланса паллашрĕç.

*Илья КЛОЧКОВ.*

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**



# Чĕлхе туйăмне, чăвашлăх туртăмне çухатас марччĕ

**«Тантăшпа», унчченхи «Пионер сасси» хаçатпа, ачаранпа туслă учитель камши тесе ыйтсан эпир ЧР тава тивĕçлĕ учительне, РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченне, Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн пайташне, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕн председательне Геронтий Лукиянович Никифорова калама пултаратпăр. Вăл 2006 çулта «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Раççейри чи пултаруллă учительсен конкурсĕнче Раççей Президенчĕн грантне тивĕçнĕ, çĕнтерӳçĕ пулнă.**

Геронтий Лукиянович Никифоров 1953 çулхи сентябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Хурамал Туçа ялĕнче çуралса ӳснĕ. Салтакра икĕ çул пулнă. Пулас учитель И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ. Г.С. Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейĕнче республикăри тĕрлĕ районтан килнĕ ачасене тăван чĕлхепе литературăна 30 çул вĕрентнĕ. Геронтий Лукиянович мăшăрĕпе Ольга Григорьевнăпа пилĕк ача пăхса çитĕнтернĕ. Халĕ вĕсем пурте çемьеллĕ, ашшĕ-амăшне 8 мăнукпа савăнтараççĕ.

Республикăра Геронтий Лукияновича ачасемпе тĕрлĕ конкурс ирттернипе те питĕ лайăх пĕлеççĕ. «Тантăш» вулаканĕсене çак хастар та пултаруллă вĕрентекенпе тĕпленĕрех паллаштарас тĕллевпе Геронтий Лукияновичпа хăйĕнпе курнăçса калаçас терĕмĕр.

**– Геронтий Лукиянович, малтанах пирĕн вулакансене эсир «Тантăш» хаçатпа пĕрле конкурсем йĕркелеме мĕнле пуçлани кăсăклантарать. Çакăн пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Эпĕ «Тантăш» хаçатпа вунвиçĕ çултанпа туслă. Çав туслăх паянхи кунччченех пырать. Лицейра учительте ĕçленĕ май ачасемпе яланах хаçатпа çыхăну тытаттăмăр. Вĕсемпе Пичет çуртне журналистсемпе курнăçма, калаçма, хаçат ĕçĕпе паллашма килеттĕмĕр. Лицейçăсен хайлавĕсем «Тантăшра» часчасах пичетленетчĕç.

Шкул ачисен литература пултарулăхне ӳстерес тĕллевпе Чăваш Республикин халăх писателĕпе Г.В. Красновпа пĕрле 1997 çулта пуçласа çамрăк чăваш çыравçисен И.Я.Яковлева халаласа «Букварьтен - илемлĕ литературăна çити» конкурс ирттертерме пуçларăмăр. Ăмăртăва хамăр республикăран кăна мар, Тутарпа, Пушкăрт республикăсенчи, Чĕмпĕр тата Самар облаçĕсенчи ачасем питĕ хастар хутшăнатчĕç. Çак конкурсăн тĕп ăмăртăвĕнче чăваш писателĕсемпе поэчĕсем ачасемпе хăйсемпе мастер классем ирттеретчĕç. Унта паха ĕçсен авторĕсемпе пĕрле вĕсен ĕçĕсене тишкереттĕмĕр. Паллах, çавнашкал мелпе ĕçлени шкул ачине поэзипе прозăн илемлĕх мелĕсемпе паллашма пулăшать тата хăйĕн тавракурăмне, çырас ăсталăхне ӳстерме май парать. Хăш-пĕр çулсенче ăмăртăва 200 ытла ача хутшăнни те пулнă. Уйрăмах сăвă çыракансем йышлăччĕ. Çак конкурса хутшăннисенчен асра юлнисене палăртсах хăварас килет. Вĕсем çаксем: Елена Крылова, Алина Шамбулина, Лира Леонтьева, Женя Степанов, Александр Никифоров, Оля Васильева, Ирина Павлова, Надя Кузнецова, Света Поликарпова, Ирина Степанова, Мальвина Петрова, Валя Громова, тата ыттисем те. Çамрăк çыравçăсен пултарулăх ăмăртăвне пĕтĕмпе 15 хут ирттертĕмĕр. Шел, лицей хупăннă хыççăн çак конкурса урăх йĕркелеме май килмерĕ.

Паянхи кун пире чĕрĕ пуплев тата çыру культури хавшани, чăваш чĕлхин кирлĕлĕхĕ чакса пыни пăшăрхантарать. Çакăнпа эпир килĕшме пултараймастпăр. 2014 çулхи ноябрь уйăхĕн 27-мĕшĕнче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче Çеçпĕл Мишши 115 çул тултарнине чысласа «Чăваша – чăваш чĕлхи кирлĕ...» форум ирттертĕмĕр. Унта чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен историйĕпе культури вĕрентекенсен ассоциацийĕсен ертӳçисем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн преподавателĕсем, ăсчахсем, чĕлхеçĕсем, писательсем тата студентсем хутшăнчĕç. Çак форума шкул вĕрентĕвĕнче тата пурнăçра чăваш чĕлхин кирлĕлĕхне, унăн пĕлтерĕшне çĕклес тĕллевпе йĕркелерĕмĕр. Канашлăва хутшăннисем хăш-пĕр шкулсенче чăваш чĕлхипе литературин сехечĕсен шутне чакарнине сивлерĕç, ултă кунлăх вĕренӳ эрнине сыхласа хăварнине ырларĕç.

**– Паян мĕнле проектсемпе ĕçлетĕр?**

– Эпир кăçал К.В.Иванов çуралнăранпа 125 çул çитнине халалласа Чăваш наци конгресĕпе пĕрле «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» пултарулăх конкурсне ирттерме йышăнтăмăр. Вăл виçĕ номинацирен тăрать: «Чи лайăх сăвă», «Чи лайăх эссе», «Чи илемлĕ ӳкерчĕк». Ку ăмăртăва Раççейри 8-11-мĕш классенче вĕренекен мĕн пур чăваш ачи хутшăнма пултарать. Конкурса ĕçсем килсех пыраççĕ. Çу уйăхĕн вĕçĕнче пултарулăх ăмăртăвне пĕтĕмлетĕпĕр.

Тепĕр курăмлă ĕçе палăртса хăвармалла. Кăçал чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ çуралнăранпа 100 çул çитнине чысласа «Хура çăкăр» романа кам тĕплĕн вуланă?» викторина ирттеретпĕр. Ăна йĕркелекенсем - Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕ тата «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕн» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ.

**– Малашлăхра мĕн пурнăçлас килет? Мĕнле ĕмĕтсемпе пурăнатăр?**

– Март уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче чăваш орфографийĕ пирки пысăк конференци регион шайĕнче иртрĕ. Унта ученăйсемпе пĕрле чăваш чĕлхи вĕрентекенсем те хутшăнчĕç. Тавлашуллă самантсем те пулчĕç. Эпир орфографи комиссийĕ чăваш сăмахĕсене пĕрле е уйрăм, е дефиспа çырассине татса парасса шанатпăр.

Май уйăхĕн 29-30-мĕшĕсенче Пушкăртстанăн Слакпуç ялĕнче К.В.Иванов 125 çул тултарнине халалласа ирттерекен поэзи уявне хутшăнма хатĕрленетпĕр.

Чăваш Республикин чăваш чĕлхипе литератури учителĕсен секцийĕн ертӳçи пулнă май районсен ассоциацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Районсене тухса çӳресе чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен культури предмечĕсене вĕрентес ыйтусене тĕтăшах хускататпăр, çĕнĕ мелĕсене палăртатпăр. Шкул вĕрентĕвне Федераллă патшалăх вĕренӳ стандарчĕ кĕрсе пырать. Çак патшалăх стандарчĕ чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕнче çĕнĕлĕхсем кĕртме ыйтать. Ыйтусене эпир республика учителĕсемпе пĕрле татса пама тăрăшатпăр.

**– Геронтий Лукиянович, эсир чăваш чĕлхипе литератури вĕрентĕвне лайăхлатассишĕн кирлĕ шухăш хывсах тăратăр, ĕмĕтӳсем те сирĕн пысăк. Вĕрентӳ ĕçне чуна панисĕр пуçне пушă вăхăтра эсир мĕнпе кăсăкланатăр тата аппаланатăр?**

– Пушă вăхăтра кĕнеке вулама юрататăп. Çапах та чун киленĕçĕ пур – шăплăхра сăвă çырма кăмăлласси.Тĕрĕссипе каласан, хăш чухне манăн чунра вĕри хăват çуралать, сăвăсем шăрçалама хавхалантарать. Эпĕ хамăн поэзире туслăхпа юрату, çамрăклăх, тăван кĕтес, вĕрентекен ĕçĕ, лицейри пурнăç çинчен çыратăп. Хайлавсенче чăвашлăх туртăмне, туслăхпа юрату туйăмне, тăван тавралăх илемне сăнарлă çырма тăрăшатăп.

**– Паянхи шкул ачисене, студентсене эсир мĕн сĕнме пултаратăр?**

– 2008 çултанпа тăхăр класс пĕтерекенсене эпир чăваш чĕлхипе патшалăх экзаменĕ тыттарса пытăмăр. Халĕ ăна суйласа илмелли экзамен шутне кĕртрĕç те унпа экзамен тытакан йышĕ сахалланчĕ. Хам енчен эпĕ тăххăрмĕш класс пĕтерекенсене, пĕлĕве тĕрĕслеме тата чăваш чĕлхин пĕлтерĕшне ӳстерес тĕллевпе çак предметпа экзамен тытма сĕнетĕп. Экзамен тытсассăн тăван чĕлхен сумĕ те хисепĕ те ӳсет. Чĕлхе туйăмлă, тăван литературăпа туслă 11-мĕш класра вĕренекенсене хăйсен пурнăçне чăваш чĕлхипе çыхăнтармаллах тесе калатăп. Пире паянхи кун тĕпчевçĕсем, чĕлхеçĕсем, куçаруçăсем, çыравçăсем, шкулсене çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртекен çамрăк учительсем кирлĕ.

Çамрăксене чăваш чĕлхине аталантарас тесе мĕн кирлине туса пыма ыйтатăп. Эсир те чĕлхен йывăр лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшма пултаратăр. Пĕрлĕхре вăй пур тенине яланах асра тытасчĕ.

Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнă май унпа ним вăтанмасăр пур çĕрте те калаçăр тата кăçал литература çулталăкĕ. Çавна пула шкул ачисене, студентсене илемлĕ литературăна юратса вулама чĕнсе калатăп. Кĕнеке вуласан чун пуянрах пулнине манас марччĕ.

*Анна КОЛЬЦОВА*
*студент калаçнă.*

# Вӑтӑр ултӑ ҫултан та манӑҫман

**«Тантӑш» хаҫат хӑйӗн хастар авторӗсене яланах асра тытать, лауреат ятне тивӗҫнисене вара – пушшех те. 1969-мӗш ҫултан пыракан ырӑ йӑлана паян та пӑрахӑҫламан. Редакцири лауреатсен стендне сӑнанӑ май унчченхи ҫамрӑк авторсен паянхи шӑпи пирки те шухӑшлама тытӑнатӑн. Чылайӑшӗ хӑйӗн иленӗвне юратнӑ ӗҫе куҫарса ҫитӗнӳ хыҫҫӑн ҫитӗнӳ тума тытӑннӑ-ҫке, вӗсене кура чӑвашлӑх сасси ҫирӗпрех янӑранӑн туйӑнать.**



Хаҫатӑн 1980 ҫулхи лауреачӗсенчен пӗрне вара Комсомольски районӗнчи культурӑпа кану центрӗнче «Хыпар» Издательство ҫурчӗн кунне халалланӑ уявра тӗлпултӑмӑр. Сцена ҫине «Тӑван Атӑл» журнал редакторӗ Василий Кервен тухсан Асанкасси шкулӗн директорӗ Елена Матвеевна Яндрова /хӗр чухнехи хушамачӗ – Григорьева/ вӑтӑр ултӑ ҫул каяллахи ырӑ вӑхӑта аса илчӗ, ахӑртнех. Ун чухне вӑл «Артек» лагерьте канса курнӑҫке! Василий Гаврилович вара ҫав ҫулсенче «Пионер сасси» хаҫатра ӗҫленӗ. Ку тӗлпулу мӗншӗн ҫав тери хумхантарнине пӗлес тетӗр-и? Ан васкӑр-ха, тӗплӗнрех каласа кӑтартар.

Елена Матвеевна ҫирӗм ҫичӗ ҫул ӗнтӗ шкул ачисемпе ӗҫлет. Хӑйӗн ӗҫне вӑл мӗн ачаранах килӗштернӗ. Шкулта кашни урока юратнӑ, чӑваш чӗлхи урокӗсене вара – пуринчен ытла. Мария Петровна Гаврилова вӗрентекенӗн кашни сӑмахне ӑса хывнӑ. Вулавӑшра вӑл тытман чӑвашла пӗр кӗнеке те юлман, ҫӗннисем килессе хӗрача ялан чӑтӑмсӑр кӗтнӗ.

– Учителе пит чӑрмантарсах тӑман пуль эпӗ, – аса илет Елена Матвеевна. – Халь ӗнтӗ ачасене ҫырма хистетпӗр, ӗҫӗсене тӗрӗслесе паратпӑр та хаҫата яма сӗнетпӗр. Ун чухне эпӗ хам тӗллӗн ӗҫленӗ, атте-аннене те кӑтартман. Вӗсен пушӑ вӑхӑт та ҫукчӗ.

Редакцире тӑрӑшакансем – Юлия Силэм тата Василий Кервен – хаҫат тусӗн Ленӑн ҫырӑвӗсене яланах хуравланӑ. Заметкӑсене мӗншӗн пичетлеменнине, мӗнле йӑнӑшсем кайнине, тепрехинче мӗн ҫинчен ҫырмаллине ӑнлантарнӑ.

– Мӗн тери савӑнаттӑмччӗ ҫав ҫырӑва илсен. Пӗрре те кӳренместӗмччӗ. Паллах, тепрехинче тӑрӑшса ҫыраттӑм. Хамӑн ӗҫсене хаҫатра курсан манран телейли пулман та, – ҫав асамлӑ вӑхӑта таврӑннӑн хавхаланса калаҫать вӑл.

«Пионер сасси» хаҫата ҫырса тӑнӑран хӗрача тӗрлӗ районтан тус-юлташ тупнӑ, пӗр-пӗринпе ҫыру ҫӳретнӗ. Вӑтам шкул хыҫҫӑн Чӑваш патшалӑх университетне вӗренме кӗрсен вара ҫав туслӑх малалла тӑснӑ.

Вӑтӑр ултӑ ҫул каяллахи апрель кунӗсене вара «Пионер сассин» хастар авторӗ Крымри «Артек» лагерьте, пӗтӗм Раҫҫейри ҫамрӑк корреспондентсен сменинче ирттернӗ. Путевка парнеленӗшӗн Елена Матвеевна хаҫат ӗҫченӗсене чунтан тав тӑвать. «Артека» ӑсатса яраканни Петӗр Ҫӑлкуҫ пулнӑ, унтан кӗтсе илекенни вара – Василий Кервен. Лагерьтен мӗн тери хавхаланса, ҫунатланса таврӑннине Елена Матвеевна паянхи пек астӑвать. Шӑпах ҫавӑн чухне ӑнсӑртран сиксе тухнӑ йывӑр лару-тӑруран ӑна Василий Гаврилович хӑтарнӑ иккен. Пур ачана та ашшӗ-амӑшӗ кӗтме тухнӑ, Красноармейски районӗн хӗрӗ Лена ҫеҫ пӗччен тунсӑхласа ҫӳренӗ. Ӑна кӗтекенӗсем тухайман-ҫке. Хаҫат ӗҫченӗ ҫакна асӑрханӑ та хӗрача мӗншӗн киле кайманнипе кӑсӑкланнӑ. Сӑлтавне пӗлсен: «Эх, ухмах! Мӗншӗн тӳрех каламарӑн?» – тесе ятланҫи тунӑ. Хастар автора вӑл хырӑм выҫҫине ирттерме тата киле ҫитме укҫа тыттарнӑ. Тӗнче ырӑ ҫынсемсӗр мар тени тӗрӗсех ҫав. Ҫак пулӑм хӗрача чӗринче ӗмӗрлӗхе ҫырӑнса юлнӑ, тӑван ҫӗрӗн маттур хӗрӗ пулма хистенӗ.

– Манра яланах икӗ вӑй тапса тӑнӑ, икӗ сасӑ. Пӗри журналист, тепри учитель пулма хистетчӗ. Эпӗ пурнӑҫра вӗсене яланах тытса пынӑ, иккӗшне те. Шкулта ӗҫлетӗп ӗнтӗ. Пӗр вӑхӑт район хаҫатӗнче те вӑй хутӑм, – тет ачасене хаҫатпа туслаштарма тӑрӑшакан Елена Матвеевна.

Комсомольски районӗнчи Хырхӗрри шкулӗнче вунпилӗк ҫул ӗҫленӗ вӑхӑтра вӑл «Ҫилҫунат» кружок ертсе пынӑ. Учитель ӗҫӗ – ачасен ҫитӗнӗвӗсенче. Маттур вӗрентекен патӗнче никӗс илнӗ хӑш-пӗр ҫамрӑксем халӗ республика хаҫачӗсенче ӗҫлеҫҫӗ.

– Хальхи ачасем ҫинчен мӗн калама пулать? – паянхи лару-тӑрӑва хак пама пикенчӗ Асанкасси шкулӗн директорӗ. – Ача ачах ӗнтӗ вӑл. Халь компьютер, Интернет вӑхӑчӗ. Ачана илӗртме пӗлмелле. Ҫав ӗҫ патне туртӑмӗ пулсан, ӑна илӗртсе ярсан вӑл хаҫат-журнал та вулать. Ҫырассипе те ертсе пымалла, паллах. Ертӳҫӗн хавхалантарма пӗлмеллех, хӑйӗн те ҫав енӗпе ҫунса тӑмалла.

Пирӗн хаҫатӑн паянхи тусӗсем хушшинче те Елена Матвеевна Яндрова /Григорьева/ пек хастарҫӑсем пурах ӗнтӗ. Эппин, нумай-нумай ҫул иртсен вӗсен ҫитӗнӗвӗсемшӗн те савӑнасчӗ-ха.

*Лариса ПЕТРОВА.*

**Василий КУЗЬМИН сӑнӳкерчӗкӗ.**

# «Яланах лайӑххине ӗненмелле»



**Вуннӑмӗш класри Марина Платонова – вӗренӳ отличници. Вӑл яланах малта, пур ӗҫре те хастар. Кашни шкул ачин те ҫавӑн пек пулмалла тесе шухӑшлать вӑл. Тӑтӑшах пӗр вырӑнта ларсан, аталанма тӑрӑшмасан йывӑрлӑхсене те ҫӗнтереймӗн, ҫитӗнӳ те тӑваймӑн. Мал ӗмӗтлӗскер тӗрлӗ конкурс-викторинӑна хаваспах хутшӑнать. Ҫӗнтерӳ патне чунтан ӑнтӑлакан хӗрупраҫӑн пухмачӗнче Тав хучӗпе грамота, диплом чылай.**

Марина тӑрӑшса вӗренни тӳрех сисӗнет: киле панӑ ӗҫсене тӗплӗн хатӗрлет, урокра учителӗн кашни ыйтӑвне туллин хуравлать.

– Марина хӗрӗм шкул ҫулне ҫитиччен вулама тата ҫырма вӗренчӗ. Ытти ачасем те ҫаплах, пӗчӗкренех вулама, шут йӗркине пӗлме хӑнӑхрӗҫ. Марина – кӗҫӗнни. Аппӑшӗсем шкултан лайӑх вӗренсе тухрӗҫ. Аслӑ пӗлӳ заведенийӗсенче ӑс пухаҫҫӗ, – каласа пачӗ Арефий Андреевич Маринӑн ашшӗ. Вӑл обществопа пӗлӗвӗ, истори, право предмечӗсене вӗрентекенӗнче тӑрӑшать.

Ытларах правопа тата обществопа пӗлӗвӗпе кӑсӑкланакан Марина мӗнле професси суйласа илессине ҫирӗппӗнех пӗлтерчӗ. Вӑл юрист пулас ӗмӗтлӗ. Шухӑшланине пурнӑҫа кӗртес тесен вара чылай вӗренмелле, тӑрӑшмалла, конкурссенче палӑрмалла. Пултаруллӑ хӗрупраҫ ҫуллен иртекен «Экселсиор» наукӑпа практика конференцийӗнче те пӗрре мар мала тухнӑ. Районти, республикӑри тупӑшусенчен чылай медаль ҫӗнсе таврӑннӑ. Пӗлтӗр вара регион шайӗнче право предмечӗпе иртнӗ олимпиадӑра призер ятне тивӗҫнӗ. Пысӑк ҫитӗнӳ туни Маринӑна малашне те тӗрлӗ тупӑшура, ӑмӑртура хӑйне тӗрӗслесе пӑхма хистет.

Спортра та маттур вӑл. Ҫивӗч ӑслӑскер шашкӑлла тата шахматла выляма ӑста. Ҫак енпе тӑтӑшах ӑмӑртусене те хутшӑнать. Ҫулсерен Муркаш районӗнчи хӗрачасем хушшинче иртекен шахмат турнирӗнче малтисен йышӗнче вӑл. Улттӑмӗш ҫул ӗнтӗ пӗрремӗш вырӑна тухать.

– Малтан волейболла та выляма кӑмӑллаттӑм. Халӗ вӑхӑт сахалтарах. Экзаменсем ҫывхарнипе вӗренмелли нумайланса пырать, – ӑнлантарчӗ Марина. – Анчах спорт сывлӑхшӑн усӑллине манмастӑп пӗр самантлӑха та... Хамӑн пур ҫитӗнӳшӗн те аттепе аннене чунтан тав тӑвас килет. Вӗсем пире яланах тӗрӗс тӗкел ҫитӗнтерме тӑрӑшаҫҫӗ, тӗрӗс воспитани параҫҫӗ.

Ку чӑнах та ҫапла. Арина Вениаминовнӑпа Арефий Андреевич тӗпренчӗкӗсемшӗн чунтан пӑшӑрханаҫҫӗ, вӗсене тӗрӗс ҫул ҫине тӑратас тесе ӑнтӑлаҫҫӗ. Телей уҫҫи – ҫирӗп сывлӑх тесе шухӑшлаҫҫӗ вӗсем. Ҫавӑнпах та пулӗ Платоновсен туслӑ ҫемйи сывӑ пурнӑҫ йӗркине пӑхӑнать. Тӗрлӗ хускану туса хул-ҫурӑма тӗреклетесси, тӗрӗс апатланасси, кашни кун сивӗ шывпа чӳхенсе кӗлеткене писӗхтересси тахҫанах йӑлана кӗнӗ кил-йышра.

– Ачасем ҫуралсанах вӗсене сивӗ шыва хӑнӑхтарма тухтӑртан ирӗк ыйтнӑччӗ. Виҫӗ хӗрачана та мӗн пӗчӗкренех сывӑ пурнӑҫ йӗркине пӑхӑнма хӑнӑхтартӑмӑр, – каласа пачӗ Арефий Андреевич. – Ачасем малашне те ҫак йӑлана пӑрахмасса шанатпӑр.

Телейлӗ те туслӑ ҫемьере ҫитӗнекен Марина класӗнче ырӑ та ҫирӗп кӑмӑлӗпе, сӑпайлӑхӗпе палӑрма ӗлкӗрнӗ. Юлташӗсем ӑна хисеплеҫҫӗ, унӑн ӑслӑ шухӑшӗсене яланах итлеҫҫӗ. Вӗрентекенсем те пултаруллӑскере мухтаҫҫӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ Маринӑна староста тивӗҫне пурнӑҫлама шанса панӑ. Вӑл тантӑшӗсемшӗн тӗслӗх вырӑнӗнче.

– Ума лартнӑ тӗллевсене пурнӑҫлас тесен хӑюллӑ, ҫирӗп чунлӑ пулмалла. Кулянмалли пулсан та нихӑҫан алла усмалла мар. Яланах лайӑххине ҫеҫ ӗненмелле, – хаҫат вулаканӗсемпе пайларӗ хӑйӗн вӑрттӑнлӑхӗсене хастарскер. – Яланах малалла утмалла, хӑвна ҫеҫ шанмалла.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Муркаш районӗ,
Ярапайкасси шкулӗ.

# Хăнара – «Тетте» журнал




## Йытă çури

Кун каç енне сулăнни тахçанах ĕнтĕ. Хуçи хăйĕн йыттине пўрт умне хăварнăранпа вăхăчĕ те нумай иртрĕ. Лешĕ тухса ачашласса, тутлă кучченеçпе сăйласса чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Унталла-кунталла чупса пăхрĕ, йынăшкаларĕ. Кăштах ўлесе те макăрчĕ. «Тен, асăрхамасăр тата ман пирки аса илмесĕр кил-çуртран тухса та кайрĕ вăл?» – шухăшларĕ ăшĕнче. Анчах шăхăша пăрахăçласа хăйĕн ĕçĕпе çўрекен кашни иртен-каяна куçĕнчен тархасласа пăхрĕ. Урамра татти-сыпписĕр машина чупать, халăх унталла та кунталла хĕвĕшет.



Сасартăк вăл хăй çине такам сиввĕн пăхнине туйрĕ. Вăрăм пўллĕ тата кăнттамрах арçынран йытă аяккалла пăрăнасшăнччĕ. Анчах унăн йывăр пушмак пуçĕ мĕскĕнĕн аяк пĕрчинчен пырса лекрĕ. Йытă çури йынăшса ячĕ, сывлăшĕ пўлĕнчĕ. Сурана çулама пуçларĕ. Тапнă вырăн чăрăнми ыратрĕ. Пĕр вăхăт итлесе выртрĕ. Юнашарах çынсем иртсе çўреççĕ. Пĕрисем шеллесе пăхса илеççĕ, теприсем курмăш пулса иртеççĕ. Йытă çури çаплах хуçине кĕтрĕ.

Урисем çине пуçне хурса тĕлĕрсе илчĕ. Куç умĕнче иртнĕ пурнăç: амăшĕн сĕтне ĕмет пек, хуçи апат çитернĕрен ăна тав туса сиккелесе çўрет, ывăлĕ унпа пĕр чарăнми вылять... Пĕр кунхине вара кил хуçи ăна паллакан çынсене парса ячĕ. Пурте юратрĕç, ачашларĕç, хуçан кашни сăмахне итлерĕ вăл…

... Чунĕ кўтсе килнипе ўлесе макăрса ячĕ. Урампа пыракан арçыннăн хаяр сасси ăна чарчĕ. Тĕттĕмленчĕ. Вăл çўçенсе илчĕ. Кĕрхи вичкĕн çил хулан пушă урамĕсенче хуçаланчĕ. Йытă çури каçхи хулан кичем урамне тĕмсĕлсе пăхса выртрĕ. Хула ыйха путрĕ. Суран çаплах ыратрĕ, хуçа та çук... Çĕр калама çук вăраха тăсăлчĕ.

Ирхине хула каллех шавпа тулчĕ. Чăтма çук апатланас килет. Иртсе пыракан пĕр ватă сумкинчен тин çеç кăмакаран пиçсе тухнă çăкăрăн ырă шăрши таврана сарăлчĕ. Йытă ун хыççăн чупрĕ. Унтан хĕрарăм, каярах арçын ача хыççăн лĕпĕстетрĕ... Анчах ăна никам та шеллемерĕ, алла илмерĕ. Аяккалла пăрăнма та хăрарĕ. Тен, хуçи пĕр-пĕр çуртри хваттертен тухĕ те ăна пăрахса кайĕ? Шел, никама та кĕтсе илеймерĕ.

Кăнтăрла хыççăн ун умĕнченех асламăшĕпе мăнукĕ иртсе пычĕç. Ача çурана курчĕ те асламăшне тем каларĕ. Вĕсем ăна канфет пачĕç. Выçăскер самантрах çисе ячĕ. Вафлипе те сăйларĕç, ăна та çирĕ. Пĕр-пĕринпе темĕн калаçкаласа малалла утрĕç. Мăнукĕ çиçĕмле хăвăртлăхпа каялла çаврăнчĕ те йытă çурине хăйсен патне чĕнчĕ. Лешĕ нумай кĕттермерĕ, хўрине вĕлтĕртеттерсе çĕнĕ хуçасем патне васкарĕ. Ăнланчĕ, вĕсем тупăнни йытă çурин чĕринче ырă шанчăк çуратрĕ.

***Юлия НИКОЛАЕВА.***
Етĕрне районĕ,
Мăн Сĕнтĕр.

**Александр ПЛЕХАНОВ ўкерчĕкĕ.**

### ХАВАСЛĂ УРОК



**Тюльпансем мĕнле тĕслисем пулаççĕ? Вĕсене сăрласа илемлет.**



**Пĕр пек формăллă икĕ фигура туп.**

**Севиль МУСАЕВА ўкерчĕкĕсем.**

### ПОЭТСЕМ – АЧАСЕМ ВАЛЛИ

*Микул ПУЛАР*

## Кĕтет



*Виççĕре кăна Ваçук,*
*– Çырлана атя-ха, – тетĕп.*
*– Çук, паян ман вăхăт çук, –*
*Пиччене çартан кĕтетĕп.*

**Александр ПЛЕХАНОВ ўкерчĕкĕсем.**

## Тĕлĕкре

*– Эп таçта та пулса*
*курнă! –*
*Мухтанать Кирук ялан.*
*Шĕвĕркке, ăçта-ши*
*пулнă?*
*Тĕлĕкре кăна, паллах.*





## Утаймасть

*Сĕтел тавра вăл*
*ларать,*
*Хутран-ситрен*
*шукалать.*
*Урама та тухаймасть,*
*Ури пур та утаймасть.*

Туссем! Эсир "Тетте" журнала çырăнма ĕлкĕреймен пулсан, васкăр! Унăн хакĕ — 148 тенкĕ те 98 пус (республикăра), индексĕ — 73771. Республика тулашĕнче — 11468.

*Вĕрентекен пирĕн пурнăçра питĕ пысăк вырăн йышăнать. Вĕсем тăрăшнипех эпир вулама-çырма, сăвва хитре калама, юрлама-ташлама хăнăхатпăр. Ушкăнра хамăра епле тытмаллине, çынпа калаçмаллине, аслисемпе кĕçĕннисене хисеплемеллине те вĕсемех вĕрентеççĕ. Педагогсем пулăшнипех эпир хамăра килĕшекен професси суйлатпăр... Тата мĕн чухлĕ ыррине, лайăххине вĕрентеççĕ вĕсем пире. Апла пулсан, эпир учительсен умĕнче ĕмĕр парăмра.*

## Сире килсе курăп-ха...



1«а» классем чăваш чĕлхи урокĕ епле хăвăрт иртнине сиссе те юлаймарĕç. Авă урок вĕçленнине систерсе шăнкăрав та янăрарĕ.

– Алина Ильинична, епле-ха капла? Сирĕнпе ытларах пулас килетчĕ, – терĕ Коля Сергеев юратнă вĕрентекенĕ патне пырса.

– Кулянма кирлĕ мар, çитес урокра каллех тĕл пулăпăр, – ăшшăн пуплерĕ вăл арçын ачапа.

– Çапла та-ха... Анчах эпир çитес вăхăтра, туяннă хăттере çĕнетсе-юсаса пĕтерсен, Шупашкара кусса каясшăн-çке. Вара сирĕн урокăрсене çӳрейместĕп. Кусса кайман. Хам вара халех кулянатăп... Çапах сире тата пĕрле вĕренекенсене килсе куратăпах, унсăрăн тунсăх аварĕнчен тухаймăп. Кăшнаруй ялĕнче пурăнакан асаттепе асанне патне те тăтăш çитĕп. Вĕсем мана юратаççĕ, çавăнпа ялanах тутлă апатсем пĕçереççĕ, пылак кучченеç илсе хураççĕ, – сăмах çăмхине малаллах сӳтрĕ Канашри 11-мĕш шкулăн хастар вĕренекенĕ.

...Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Ăстакасси ялĕнче çут тĕнчене килнĕ Алина Ильинична Кириллова мĕн пĕчĕкрен вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ. Тусюлташĕсемпе вĕсем яланах «шкулла» выляна. Алина вара «педагог» пулса «вĕренекенсене» диктант, сочинени, изложени çыртарнă.

Алла аттестат илсен тӳрех Канашри педагогика училищине çул тытнă. Экзаменсене ăнăçлă тытса çăмăллăнах вĕренме кĕнĕ.

Студент пурнăçĕ çăмăллăн иртмен. Пурте килшĕн, ашшĕ-амăшĕпе пĕртăванĕсемшĕн тунсăхланине палăртнă. Хăшĕпĕри «5» паллăпа çеç вĕреннĕ пулин те, япалисене илсе килĕсене пустăраннă.

– Пулмасть кунта вĕренесси. Каçхине кăна мар, кăнтăрла та тăван кил куç умне тухать. Атте-анне сасси кунĕпех хăлхара янăрать. Пĕчĕк шăллăмсемпе йăмăкăмсен сăнарĕсем те куç умĕнчен кайма пĕлмеççĕ, – тесе ыттисемпе сывпуллашса тухса кайнă.

Пĕри те тепри тухса кайни юлнисене уйрăмах пăшăрхантарнă. Алина та шухăша путнă. «Манăн те килтех пурăнас килет. Канашран Сĕнтĕрвăрри çав тери инçе. Час-час тăван ялта пулма çук. Кайсан вара, чăн та, атте-анне ăшшиллĕ пӳртрен пĕрре те тухас килмест. Анчах малашлăх пирки шухăшламалла-çке. Ялан юратнă çыннăмăрсен çунатти айĕнче киленсе лараймăн. Хамăн вĕренсе тухса ĕçлеме пуçăнмалла. Кайăк чĕпписем те авă пысăкланcан амăшĕн çунатти айĕнче пурăнмаççĕ-çке», – тесе хăйне хăй лăплантарнă.

...Канашри 11-мĕш шкулта Алина Ильинична 22 çул ĕçлет ĕнтĕ. Хăйне шанса панă ĕçе чунтан-чĕререн пурнăçлать.

## Тунсăхлама вăхăт çук

Çĕрпӳ районĕнчи Тавăшкасси шкулĕн 2-мĕш класĕнчи Володя Козлов – лидер. Вĕренӳре ăна çитекен çук. Хитре почеркла арçын ача пур предметпа та «5» паллăпа вĕренет. Класс ертӳçи Надежда Евлогиевна Антонова урокра мĕн ăнлантарнине пĕр сиктерми итлесе ларать, ăша хывать.

– Володя пур ĕçе те тăрăшса пурнăçлать. Калав е юмахри пулăм пирки мĕн тери илемлĕ каласа пама пултарать тата! Итленĕçемĕн итлес килет. Вуласса та артист пек хитре те яка, пĕр такăнмасăр вулать. Çавăнпах шкул тата ял библиотекисене кăмăлтан çӳрет. Килĕшекен хайлава та чун-чĕре хавалĕпе шĕкĕлчесе тухать. Халĕ тĕрĕ тĕрлессипе кăсăкланать. Тĕрлĕ салфетка хатĕр унăн. Хăйне валли кăна мар, амăшĕпе тăванĕсем валли те хатĕрленĕ. Çакăн пек маттур ача çитĕнет те Козловсен çемйинче. Куншăн хам та çав тери савăнатăп, – тет кĕçĕн классен вĕрентекенĕ Надежда Евлогиевна хавассăн.

Володя çемьере пĕртен-пĕр ача. Çавăнпа ашшĕ-амăшне пулăшассине те хăйĕн тивĕçĕ тесе шухăшлать.

– Пĕчĕчен кичем мар-и? – тесе ыйтакан тупăнсан, йăл кулать те яланхиллех хуравне тупса та хурать.

– Тунсăхлама вăхăт çук. Çĕнĕ çурт лартатпăр та аттене тăташ пулăшма тăрăшатăп. Алла пуртă-пăчкă тытасси те ют мар маншăн. Пăта çапма та пĕлетĕп. Ĕç çумне пĕчĕклех çыпçăнни хамшăн та аван-çке. Е тата вĕренĕве илес пулсан... Халех тăрăшатăп, учитель сăмахĕсене питĕ тимлетĕп. Урокра кăна мар, киле парса янă ĕçсене те тирпейлĕ пурнăçлатăп. Аслăрах классенче олимпиада-конкурссене хутшăнса хам вăя тĕрĕслесе пăхас ĕмĕтĕм те пур-ха, – хăпартланать пур çĕрте те хастарлăхĕпе палăракан Володя.



Килте те ахаль лармасть вăл. Кашăкчашăк çăвать, урай сĕрме те ӳркенмест. Чи юратнă ĕçĕ – кроликсене апатлантарасси. Темпе те хăналать вăл вĕсене.

– Купăстана та, кишĕре те тиркемеççĕ. Типĕ утта та хавхалансах çиеççĕ. Кĕçех вĕсемшĕн уяв çитет. Ара, çулла тата тутлăрах çимĕçсем пулаççĕ-çке вĕсем валли. Симĕс курăк тата сĕтеклĕ пахчаçимĕç мĕн чухлĕ! Пуçтарса вĕсене сăйлама çеç ан ӳркен, – тет Володя.

Класс ертӳçи Надежда Евлогиевна Володьăн кашни çитĕнĕвĕшĕн чунтан хĕпĕртет. Унăн вĕренекенĕ кайран та, шкултан вĕренсе тухсан, пурнăçăн анлă сукмакĕпе хастаррăн та тивĕçлĕн утасса шансах тăрать.

– Тĕрĕссипе, класри кашни ачанах паян та, малашне те ăнăçупа телей сунатăп. Вĕсене эпĕ пурне те хамăн тĕпренчĕксем пек юратса хисеплетĕп, – тет вăл ăшпиллĕн.

## Купăса тăсса ярсан-и?



Канаш районĕнчи Асхва ялĕнче çуралса ӳснĕ Лилия Михайловна Иванова паян Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕнче вăй хурать. Музыка урокĕсене ертсе пыраканскер çамрăксене яваçтарса куракан валли час-час концерт хатĕрлет.

– Пур çĕре те ĕлкĕрет, ăçтан тупать-ши вăл çапла вăй-хăват? Тĕлĕнмелле. Ачисем тата, ачисем епле хитре юрлаççĕ, ташлаççĕ. Вĕсем çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Çакă вăл йăлтах Лилия Михайловна тăрăшулăхĕнчен палăрать, – теççĕ ун пирки педагогсем.

Хастар вĕрентекен хавхалантарнăран ку шкулта музыкăна, юрра-ташша кăмăллакан сахал мар. Пĕр-пĕр уява хатĕрленĕ чухне вара кашни класс хăпартланса та савăнса ятарлă тум çĕлеттерет.

Анжела Анисимовăпа Марта Долгова Лилия Михайловнăн чи хастар пулăшуçисем. Чаплă уява та çак чипер те пултаруллă, уçă саслă та кăмăллă пикесем мĕн тери чаплă ертсе пыраççĕ. Анжела хитре юрлать, унсăр пуçне гитара калать. Вăл сцена çине тухасса вара куракан чăтăмсăррăн кĕтет.

– Мана шкулта питĕ килĕшет. Пирĕн пурнăç вĕресе тăрать. Тĕрĕссипе, лăпкăлăха юратмастăп. Пĕр вырăнта ларнипе мĕн интересĕ пултăр-ха? Пĕр-пĕр уява хатĕрленнĕ чухне тата пăшăрханăвĕпе пĕрле хаваслăхĕ те тем чухлех! «Ах, çын умĕнче такăнас марччĕ, калас тенĕ сăмаха асрах тытасчĕ. Чим, кунашкал шухăша пуçран кăларса ямалла та ырри çинчен çеç ĕмĕтленмелле», – тесе хама хам миçе хутчен йăпатман-ши? Е тата Лилия Михайловна купăсне тăсса ярсан-и, тупата, йывăç çинчи кайăксем те юрра шăрантараççĕ. Шăппăн ларакан йывăçсем те кашлама тытăнаççĕ ахăртнех, – тет мал ĕмĕтлĕ те хастар хĕр.

Умра – пысăкран та пысăк уяв. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи чарăннăранпа 70 çул çитет. Лилия Михайловна уроксем хыççăн е тăхтав вăхăчĕсенчех ачасемпе тăрăшса репетици ирттерме те пуçланă. Вăрçăра пуç хунă мăн асаттесемпе асаннесене, мăн кукаçисемпе кукамайсене халалланă юрăсене чуна пырса тивмелле шăрантараççĕ вĕренекенсем. Майăн 9-мĕшĕнче вара – палăк умне пуçтараннă ветерансен умĕнче.

– Вăрçăран нумай çын киле таврăнайман. Тăван çĕршывшăн куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупнă паттăр салтаксене пирĕн нихăçан та манăça кăлармалла мар. Вĕсем пирĕншĕн, телейлĕ те çутă пурнăçшăн хастаррăн кĕрешнĕ. Ирсĕр тăшмана пурте пĕрле кар тăрса çапса аркатнă, – терĕ Марта Долгова.

**Хисеплĕ вулаканăм, çак вĕрентекенсемпе ачасем «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнала кашниех çырăнма шантарчĕ.**

Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.

ФОРУМ

# «Каласакана -итлекен, ӳкерекене - куракан, ҫыракана вулакан кирлӗ...»

**«Пӗр ҫын сурать – типсе пырать, ҫӗр ҫын сурать – кӳлӗ пулать», – тенӗ ваттисем. Ҫапла, йышпа пуҫӑнсассӑн кирек мӗнле йывӑр ӗҫе те парӑнтарма пулать. Пӗччен тертленнинче вара усси сахал. Кӗнекепе хаҫат-журнал пичетлесе кӑларас, телерадиокӑларӑм хатӗрлес ӗҫре те ҫавӑн пекех. Ҫыраканӗ, ӳкерекенӗ, калаҫаканӗ ураран ӳкиччен тӑрӑшсан та, анчах ун ӗҫне хак паракан, йышӑнакан тупӑнмасан тапӑлтатни те кӑлӑхах. «Кам валли тата мӗншӗн ӗҫлетпӗр-ха эпир? Мӗн сӗнме пултаратпӑр? Пирӗнтен мӗн кӗтеҫҫӗ?» – ҫак ыйтусене хӑйне валли кашни ҫыравҫӑпа журналистӑн хуравламалла. Вара малашлӑхри ҫул-йӗр те уҫӑмланӗ.**





### Ҫавра сӗтел хушшинче

Ака уйӑхӗн 16–17-мӗшӗсенче Шупашкарта «Паянхи вулакан, куракан тата итлекен: вӗсен чун тӑрӑмне йӗркелесси тата пахалӑхлӑ информаципе, литературӑпа тивӗҫтересси» ятпа регионсем хушшинчи пысӑк форум иртрӗ. Ӑна Раҫҫейри Литература тата Чӑваш Енри К.В. Иванов ҫулталӑкӗсене халалланӑ. Йӗркелӳҫи – Чӑваш Республикинчи журналистсен пӗрлӗхӗ. Форума Пушкӑрт, Тутар, Мари Республикисенчи, Оренбург, Самар, Тюмень тата Чӗмпӗр облаҫӗсенчи чӑвашла тухса тӑракан хаҫатсенче ӗҫлекенсем, тӗрлӗ общество организацийӗнче тимлекенсем, наци пӗрлешӗвӗсен членӗсем, библиотекарьсем пуҫтарӑннӑ.

Мероприятин малтанхи кунӗнче хӑнасем А.Г. Николаев летчик-космонавтӑн тӑван тӑрӑхне, Шуршӑлти мемориал комплексне ҫитсе курчӗҫ. Каҫпа вара Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче Ф.Павловӑн «Ялта» пьеси тӑрӑх лартнӑ спектакльпе паллашма пултарчӗҫ.

Ӗҫлӗ тӗлпулусем Чӑваш наци библиотекинчи «Паянхи лару-тӑрура чӑваш кӗнекине сарассин ыйтӑвӗсем» ҫавра сӗтелтен пуҫланчӗҫ. Кӗнекене вулакан патне ҫитериччен мӗнлерех йывӑрлӑхсемпе тӗл пулма тивет-ха? Еплерех темӑсем хумхантараҫҫӗ тӗрлӗ ӳсӗмри вулавҫӑсене? Библиотекӑсенче чӑваш кӗнекисем ҫителӗклӗ-и? Вулакансен кӑмӑлне тивӗҫтереҫҫӗ-и-ха вӗсем? Ҫак тата ытти ыйтӑва сӳтсе яврӗҫ ҫавра сӗтеле пуҫтарӑннисем. Чӑваш кӗнеке издательствин ӗҫӗ-хӗлӗпе презентаци урлӑ паллашма пултарчӗҫ вӗсем.

Издательство директорӗ, Чӑваш Республикинчи журналистсен пӗрлӗхӗн председателӗн Валерий Комиссаров, Чӑваш кӗнеке издательствин директор ҫумӗ Наталия Яхатина вӑл е ку кӑткӑс ыйтусене еплерех татса пани, республика тулашӗнчи чӑваш диаспорисемпе ҫыхӑнусем мӗнлерех йӗркеленни ҫинче чарӑнса тӑчӗҫ. Чӑваш Республикинчи Вӗренӳпе ҫамрӑксен политикин министерствин шкулчченхи тата пӗтӗмӗшле вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ Вячеслав Бычков та, Чӑваш наци библиотекин наци литературин тата библиографи пайӗн пуҫлӑхӗ Галина Соловьева та, «Учколлектор» предприятин директор ҫумӗ Елена Петрова та ҫивӗч ыйтусене хускатмасӑр тӳсеймерӗҫ. Тюмень облаҫӗнчи чӑвашсен «Тӑван» хаҫатӑн тӗп редакторӗ, «Тӑван» чӑвашсен ассоциацийӗ» общество организацийӗн президенчӗ Ираида Маслова ассоциаци ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен каласа пачӗ, Наци библиотекине Тюмень чӑвашӗсен хаҫат пуххине халалларӗ.

### Тӗпре – пахалӑхлӑ информаци

Акан 17-мӗшӗнче Наци библиотекин 4-мӗш хутӗнче «Чӑваш халӑхӗн ҫӳпҫийӗ» курав уҫӑлчӗ. Форума хутшӑнакансем Чӑваш кӗнеке издательствинче 2012–2014 ҫулсенче кун ҫути курнӑ пичет кӑларӑмӗсене хак пама пуҫтарчӗҫ. Аслӑ залра вара «Паянхи вулаканӑн, куракан тата итлекенӗн чун тӑрӑмне йӗркелессин, вӗсене пахалӑхлӑ информаципе тата литературӑпа тивӗҫтерессин ыйтӑвӗсем» семинар иртрӗ. Кӳршӗ республикӑсемпе облаҫсенчи хӑнасемсӗр пуҫне тӑван тӑрӑхри радиопа телевидени, хаҫат-журналпа библиотека, аслӑ шкулпа влаҫ тытӑмӗнче тимлекенсем те хутшӑнчӗҫ унта. «Паянхи тӗнчере этеме нимрен те ытларах пахалӑхлӑ – объективлӑ, тулли, тӗрӗс – информаци кирлӗ. Ӑна сарас ӗҫре литература, телекурав, радио, пресса тата, паллах, Интернет пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ҫӑннипех пахалӑхлӑ информаци – общество аталанӑвне йӗркелесе пыракан пӗлтерӗшлӗ ҫӑлкуҫсенчен пӗри», – палӑртрӗ Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗ Александр Иванов.

Валерий Комиссаров та журналистсем, ҫыравҫӑсем, кӗнекеҫӗсем сӗнекен продукци – информаци тата литература – пысӑк пахалӑхлӑ пулмалли ҫинче чарӑнса тӑчӗ. «Литература этем пурнӑҫӗн уйрӑлми пайӗ, хӑйнеевӗрлӗ сӑн ӳкерчӗкӗ пулнине никам та хирӗҫлемӗ. Вӑл шалти улшӑнусене, общество саккунӗсемпе тыткаларӑш йӗркисене нимрен те лайӑхрах сӑнласа парать. МИХсем вара тӗнчекурӑма, халӑх шухӑшне йӗркелекен, информаци культурин никӗсӗсене хывакан вӑй пулса тӑраҫҫӗ», – терӗ Валерий Петрович. Паллах, XXI ӗмӗрте чылай ыйту хумхантарать этемлӗхе. Паянхи ирӗклӗ вӑхӑтра массӑллӑ коммуникаци институчӗсем темӗн тӗрлӗ пӗлӳ-хыпар та сӗнме пултараҫҫӗ ҫамрӑксене. Мӗнле хӳтӗлемелле-ха вӗсене сиенлӗ витӗмрен? Пӗртен-пӗр ҫӑлӑнӑҫ – кашниех хӑйӗн явапӑхне туйни, кӑмӑл-сипет тасалӑхӗ. Ҫитӗнекен ӑрӑва усӑллӑ, интереслӗ, пуян содержанилӗ материалсемпе тивӗҫтерес тесен шкулсен те, библиотекӑсемпе клубсен те ырми-канми тӑрӑшмалла. Ҫавӑнпа форума журналистсемпе ҫыравҫӑсене кӑна мар, педагогсемпе библиотекарьсене те чӗннӗ ӗнтӗ.

### Кашнине хумхантаракан ыйтусем

Чӑваш кӗнеке издательствин тӗп редакторӗ Валерий Алексеев предприятире кун ҫути куракан кӗнекесен пахалӑхӗ, паянхи вулакан ыйтнине еплерех тивӗҫтересси ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Чӑваш Республикинчи Наци телерадиокомпанин директорӗ Александр Магарин репертуар политикине йӗркелес ӗҫри малтанхи пӗтӗмлетӳсемпе тата аталану ҫул-йӗрӗпе паллаштарчӗ. «Чӑваш Ен» патшалӑх телерадиокомпани директорӗн ҫумӗ Елена Егорова хальхи репертуара тимлӗх уйӑрчӗ, ӑна еплерех ҫӗнетесси пирки те хыпарларӗ. Филологи ӑслӑлӑхӗсен тухтӑрӗ, Юрий Артемьев профессор илемлӗ литературӑпа паянхи этемӗн чун тӗнчине тимлӗх уйӑрчӗ тӗк Раҫҫей Федерацийӗн журналистсен пӗрлӗхӗн членӗ Демьян Семенов обществӑн кӑмӑл-сипет хаклӑхӗсене йӗркелессинче хаҫат еплерех вырӑн йышӑннине палӑртрӗ.

«Хыпар» Издательство ҫурчӗн директорӗ, Чӑваш халӑх поэчӗ Валерий Туркай «Хыпар» хаҫатӑн паянхи ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫывӑх пуласлӑхри планӗсем ҫинчен каласа пачӗ. Илемлӗ литературӑн аталанӑвне еплерех курнине филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ, Виталий Родионов профессор, Виталий Станьял литературовед, Анатолий Кипеч ҫыравҫӑ пӗлтерчӗҫ. «Урал сасси» чӑваш хаҫачӗн тӗп редакторӗ Юрий Михайлов хальхи Пушкӑртстанра чӑваш литературипе пичечӗ еплерех ларутӑрура пулнипе паллаштарчӗ. Чӗмпӗр облаҫӗнчи «Волга» патшалӑх телерадиокомпанин «Эткер» чӑваш телекӑларӑмӗсен редакторӗ, «Эткер» ыркӑмӑллӑх фончӗн председателӗ Олег Мустаев журналистсен пӗрлӗхӗн ӗҫӗн пысӑк пӗлтерӗшне палӑртса Валерий Комиссарова Дипломпа чысларӗ.

### Литературӑпа юрӑ-кӗвӗ уявӗ

Ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче Аслӑ Вӗрентекенӗмӗр И.Я. Яковлев ҫуралнӑранпа 167 ҫул ҫитнине асра тытса форума пуҫтарӑннисем унӑн палӑкӗ умне чечексем хучӗҫ. Семинар хыҫҫӑн вара пурте «Ҫыравҫӑн тата журналистӑн саманташӗсене калана сӑмахӗ» литературӑпа юрӑ-кӗвӗ уявӗнче савӑнчӗҫ. Ӑна Владимир Тимофеевпа Валентина Михайлова журналистсем ертсе пычӗҫ.

Валерий Алексеев, Юрий Артемьев, Светлана Гордеева, Николай Ишентей, Марина Карягина, Раиса Сарпи, Лидия Сарине, Елена Светлая произведенийӗсене пӗрре мар вуласа киленнӗ эпир. Хальхинче вара вӗсем хӑйсем куракан умне сӑвӑсемпе тухрӗҫ. Хӑйсем ҫырнисене кӑна мар, ытти ҫыравҫӑ хайлавӗсене те янраттарса вуларӗҫ. Дмитрий Моисеевпа Елена Зайцева журналистсен сӑмахӗсем те вырӑнлӑ пулчӗҫ. Дмитрий Суслин пурне те кӗнеке вулама чӗнсе каларӗ. Ольга Туркай: «Калаҫакана – итлекен, ӳкерекене – куракан, ҫыракана вулакан кирлӗ. Ман пурнӑҫ парни – сирӗнпе тӗл пулма тӳр килни», – терӗ. Альбина Пӑрчӑкан, Ирина Николаева, Елена Бриз шӑрантарнӑ илемлӗ юрӑсем вара пурин кӑмӑлне те ҫӗклерӗҫ.

Форума хутшӑннӑ кашни делегаци хаклӑ парнесене – Чӑваш кӗнеке издательствинче пичетленсе тухнӑ кӗнекесене – тивӗҫрӗ. Аякри чӑвашсемшӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ ку. Тӑван чӗлхепе кун ҫути курнӑ, чӑваш культурипе паллаштаракан кӑларӑмсем мулран та хаклӑрах-ҫке-ха.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Упрар тăван чĕлхемĕре

Чĕлхе кирлех калаçура,
Чĕлхе кирлех канашлура,
Çынсем тĕлпулнă вăхăтра
Чĕлхе ялан тĕп вырăнта.

Ман тăван халăхăм – чăваш:
Ĕçре хастар, килте йăваш.
Иртсе пыран ĕмĕрсенче
Упрать вăл чыслăн чĕлхене.

Тутар, чăваш эс е ирçе –
Çĕрен çулу сан пит инçе.
Ăçта пулсан та çĕр çинче
Чĕнет сана тăван чĕлхе.

Çыратăн сăвă е калав –
Унпа илетĕн чыс, мухтав.
Аçу-аннÿ хавалĕпе
Мухтан çак чаплă чĕлхепе.



Наташа ХРИСТОФОРОВА (Вăрмар районĕ, Шутнерпуç) ÿкерчĕкĕ.

## Якур вăййи

«Манăн юратнă вăйă пур, –
Тесе çырать мана Якур. –
Пĕлес килсессĕн пырса кур,
Эс пулăн ман пекех маттур».

Пĕррехинче, кану кунне,
Эп çитрĕм Якурсем патне.
Мана кĕтмен вăл ун чухне...
Кăтартрĕ хăйĕн вăййине.

Якур вăййи компьютерта –
Вăл кунĕпех вылять унпа.
Анчах та эп яра кунта
Вылямăп çав компьютерпа.

## Кĕçĕн Пăла хĕрринче

Хĕлле ларнă шурă юр
Час ирĕлет çуркунне.
Шанмасассăн кил те кур
Кĕçĕн Пăла хĕррине.
Симĕс курăк ешерет,
Çутçанталăк чĕрĕлет.
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет,
Касăн тăршшĕ кĕскелет.



Анастасия ШУРНЕЕВА (Муркаш районĕ, Юнкă шкулĕ) ÿкерчĕкĕ.

## Атте ман пулнă салтакра

Атте ман пулнă салтакра,
Тольятти ятлă хулара.
Çĕршыв хÿтĕлевçи пулни –
Чăн тивĕçе пурнăçлани.
Раççей патшалăхĕ пуян...
Ăна эс кашни кун туян.
Нефть, газ е куç тулли вăрман –
Салтак, упрар çакна ялан.

*Евгения САРДАЕВА, 9 класс.*

Елчĕк районĕ,
Патреккел шкулĕ.

## Çĕмĕрт

Эпĕ – çĕмĕрт йывăççи.
Ан вĕр эсĕ, сивĕ çил,
Ан тăк ман чечекĕме,
Ан пĕтер-ха илеме!
Вăрмана кĕрекенсем,
Эп сире çапла сĕнем:
Татăр çĕмĕрт, татăр та –
Ан амантăр турата.

## Шупашкар

Вырăс, чăваш çĕрĕ-шывĕ
Çума-çумăн, юнашар.
Мускавпа тăван пек çывăх
Пирĕн шурă Шупашкар.

*Никита СЕМЕНОВ, 3 «б» класс.*

## Чечек евĕр çын

Çĕр çинче çын пурăнать,
Чечек евĕр курăнать.
Шăтать, ÿсет, çурăлать,
Вăхăт иртсен тăкăнать.

## Вăрман

Ах, вăрман, çурхи вăрман!
Сан пĕр турат та хăрман.
Сип-симĕсех курăнан
Хĕвел ăшшăн пăхнăран...

*Ксения СИБИКИНА, 4 «в» класс.*

Шупашкар,
61-мĕш шкул.



Инесса КУЗНЕЦОВА (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Хуракасси) ÿкерчĕкĕ.

## Итлемерĕ

– Ăçта Чик-чик? – ыйтрĕ тăмана.
– Вăл кайнă вăрмана.
– Паян Хурчка туйĕ вĕт унта!
Ăна çиме лайăх самана.
Каларăм-çке ăна
Килте ларма.
Аслисене пухса
Вĕçтер эс васкаса.
Пурте тăманапа
Хĕç-пăшалланса
Кайрĕç вăрмана
Чик-чике çăлма.
Ахăрни, ихĕрни
Илтĕнет вăрманта
Тăмана хуйхăрни
Ахаль мар, тупата.
Çапăçу – тÿрĕ мар.
Чик-чике çăмăл мар!
Хурчкасем пăхаççĕ савăнса,
Ыттисем тараççĕ хăраса.
Юлашки вăй-халччен
Парăнмарĕ Чик-чик!
Анчах хăй сисиччен
Унăн тухрĕ ăш-чик.
Юхать ак юн, юхать...
Хурчка кăн-кан пăхать...
Тĕк юлнă Чик-чикрен
Хурчка пĕтернĕрен.
Вĕçлер юптарăва.
Ăс кĕтĕр ăрăва.
Çухатар мар пуçа,
Упрар ялан чыса.

*Ольга ДОЛГОВА, 8 класс.*

Шăмăршă районĕ,
Палтиел шкулĕ.

## Шарик

Пирĕн Шарик йытă пур,
Хăй вăл çав тери правур.
Хăвалать кушаксене,
Кăмăлламасть вĕсене!
Эпĕ ăна юрататăп,
Тутлă апатпа сăйлатăп.
Шăмă, яшка вăл çиет,
Мĕн пуррине тиркемест!

Эп унпа ялан вылятăп,
Вăхăтне пуянлататăп,
Патак ывăтса паратăп,
Унтан вара кантаратăп!

Юрататăп эп ăна,
Хамăн пĕчĕк йыттăма.
Вăл та мана кăмăллать,
Юратнишĕн савăнать.

*Ольга АБРОСИМОВА.*

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш шкулĕ.

## Вăрман

Пит илемлĕ курăнса
Вăрман ларать кашласа.
Ватă, çамрăк йывăççсем,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ хунавсем.

Мăйăр, кăмпапа çырла...
Пуçăм каять çаврăнса!
Эх, лараççĕ йăл кулса.
Хăшне пырса татмалла?

Ак пăхатăп тинкерсе:
Çĕлен выртать хĕртĕнсе.
Ăна курсан хăраса
Тухрăм вăрмантан чупса.

Чылай пулать унтанпа,
Тек крайман эп çырлана.
Чун хăранăран кăна
Кĕме хăрап вăрмана.

## Тăшман

Эпĕ кăштах тĕлĕрсен
Куртăм тĕлĕк ăнсăртран.
Çĕлен тухрĕ Кĕтнерен,
Чашкăрса пырать хыçран.

Авкаланса шуса çулпа
Ярса илсе сăхасшăн.
Хăлаçлантăм патакпа,
Кĕтменлĕх пулчĕ саншăн.

Хăтăлмашкăн тăрăшрăм
Хамăн тăшман аллинчен.
Канăçлăха çухатрăм
Чăн тупсăмне тупиччен.

Ытла та йывăр ĕненме
Ăнлансан ун тупсăмне.
Кам парать халь хуравне?
Шутламан эс пулнине...

Путрăм тарăн шухăша
Ĕненмесĕр çынсене.
Хăвартăн... сивĕ йĕр ăша –
Пĕлеймерĕм мĕншĕнне.



Диана ИВАНОВА (Вăрмар районĕ, Энĕшпуç) ÿкерчĕкĕ.

## Юлташ

Пурăнатпăр кушакпа
Ăнланупа, туслăхпа.
Ирттеретпĕр вăхăта
Юнашар ялан унпа.
Çур сăмахран ăнланать,
Манăн шухăш-кăмăла.
Йăпăлтатма пултарать
Хăйне кирлĕ вăхăтра.

Çÿремешкĕн усăлса
Ирех тухать урама.
Юлташсемпе тĕлпулма,
Шăши тытса мухтанма.

Эпĕ пахчара чухне
Куç илми пăхса ларать.
Сулăнсассăн каç енне
Киле кĕме йыхăрать.

*Светлана НИКОЛАЕВА.*

Вăрмар районĕ,
Вăрмар поселокĕ.



Кристина НИКОЛАЕВА (Вăрмар районĕ, Энĕшпуç) ÿкерчĕкĕ.

## Чăх чĕппи

Пĕчĕк кăна чăх чĕппи,
Тухса ÿкнĕ йăваран.
Аманнă ура сыппи,
Çавăнпа утать аран.

Мĕскĕн чăххи чупкалать,
Йăва тавра çаврăнать.
Чĕпписене вăл ятлать,
Çухатасран кулянать.

Пытăм эпĕ пулăшма,
Илтĕм ăна хам çумма.
Ачашласа, ăшăтса
Ятăм йăвине кайса.

## Тараспа Тимухха

Кÿршĕ каччи Тимухха
Юратса усрать тиха!
Тарас – шанчăклă юлташ,
Парать тĕрлĕрен канаш.

«Пурнăçа улăштарас!
Çÿреме эпĕ хавас.
Ăсталас, – тет, – тарантас», –
Çавăн пек шутлать Тарас.

Ĕçлемерĕ Тимухха,
Кирлĕ мар ăна тиха.
«Сутсан пур пек пурлăха
Пурнăн, – тет вăл, – урăхла».

Ана выртать сарăлса,
Писĕн ларать кашласа.
Ялан аншарли сыпса
Хĕрелет унăн сăмса.

Ăс илмерĕ Тимухха,
Упрамарĕ сывлăха.
Кайрĕ пурнăçĕ юхха,
Тĕлĕнтерчĕ халăха.

Ан тытăр алла черкке,
Ĕçес мар çав шĕвеке.
Çыхланар та мар спиртпа,
Туслă пурăнар спортпа.

*Валентина ХРИСТОФОРОВА.*

Вăрмар районĕ,
Тупах ялĕ.



Дарья НИКОЛЬСКАЯ (Муркаш районĕ, Юнкă шкулĕ) ÿкерчĕкĕ.

**ĂСТА АЛĂСЕМ**

# Йăрансене илемлетер-и?









Çуркуннехи хĕвел кунсерен вăйлăрах та вăйлăрах хĕртет. Юр та ирĕлсе пĕтнипе пĕрех. Акасуха, пахча ĕçĕ те кĕçех пуçланĕ. Кил хуçисем тахçанах хăш-пĕр çимĕçсен вăрлăхне ешчĕксене акнă та ĕнтĕ. Шăтса тухнăскерсене йăрана куçарса лартма та вăхăт çитет часах. Унччен вара пахчара хура çĕр çеç-ха. Çĕре чавса, кăпкалатса, йăран туса кишĕр-сухан акнă, лартнă хыççăн шăтасса кĕтмелле. Унччен вара йăрансене квиллинг техникипе ăсталанă чечексемпе илемлетер. Вĕсем çине пĕр-пĕр çимĕç ятне çырнă пĕчĕк хут листи çыпăçтарăр.

Чечек ăсталама тĕрлĕ тĕслĕ хут, хачă, çилĕм, темиçе йывăç патак, шăл тасаткăчĕ кирлĕ пулать.

Хутран 1 сантиметр сарлакăш темиçе йăрăм касса кăларăр. Шăл тасаткăчĕпе усă курса кашни йăрăма пĕчĕк тĕркене çавăрăр. Вăл пушăрах пулмалла. Хут вĕçне тĕрке çумне çилĕмпе çыпăçтармалла та пӳрнепе лапчăтса çеçке евĕр тумалла.

Хатĕр çеçкене ӳкерчĕкре кăтартнă тĕлтен çыпăçтарăр. Ун пек вăл сӳтĕлмĕ. Çеçкесене пĕр-пĕрин çумне çыпăçтарса хурăр. Йывăç патак çумне симĕс хутран ăсталанă чечек çулçине, хатĕр чечеке тата çимĕç ятне çырнă хут татăкне çыпăçтарса çирĕплетĕр.




**АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП**

## «Персик» торт

**Торт валли 1 пачка «Юбилейное» печени, 180 грамм услам çу, 800 грамм консервланă персик, 500 грамм тăпăрчă /творожная масса/, 500 миллилитр хăйма /сливки/, 30 грамм желатин кирлĕ пулать.**

Тĕпретнĕ печенипе çемçелнĕ услам çăва хутăштармалла та тĕпне ятарлă хут е пленка сарнă формăна хумалла. Кашăкпа усă курса хутăша лайăх тикĕслемелле. Хатĕр коржа хытарма сивĕтмĕше лартмалла.

Сĕткенне сăрăхтарнă персике блендерпа нимĕрлемелле. Сĕткене çулăм çине лартса кăшт вĕрилентермелле те желатин хушса ирĕлтермелле. Сиропа икĕ пĕр пек пая уйăрмалла.

Нимĕрленĕ тăпăрчă кăпăклантарнă хăймапа пĕрлештермелле. Персик сĕткенĕпе желатин хутăшĕн пĕр пайне хушмалла. Юлнине персик нимĕрне ямалла.

Хытнă корж çине малтан тăпăрчă хутăшне, унтан персик нимĕрне сийпе хумалла. Кашнине тикĕслемелле. Торта сивĕтмĕше çĕр каçма лартмалла.

## Сырпа тата ыхрапа хатĕрленĕ хăпарту

**Çак техĕмлĕ çимĕç пурне те килĕшессĕн туйăнать. Ăна гарнир пек те, уйрăммăн та сĕтел çине лартаççĕ. 4 порци валли 6 çĕр улми, 2 çăмарта, 2 ыхра шăлĕ, 3-4 кашăк майонез, 100 грамм сыр, кăшт тăвар, пăрăç, ешĕл çимĕç /укроп, петрушка/ кирлĕ.**

Кашни çимĕçе хăвăра кирлĕ чухлĕ илме пултаратăр. Сăмахран, сыр ытларах килĕштеретĕр пулсан, ăна нумайрах яма юрать.

Сыра тата ыхрана вĕтĕ теркăпа хырăр. Сырăн çур пайне 1 çăмартапа, ешĕл çимĕçпе пĕрлештерĕр. Ку хутăш хăпарту çине яма кирлĕ. Юлнă сыра, çăмартана ыхрапа тата майонезпа хутăштарăр. Унтан теркăпа хырнă çĕр улмипе, тăварпăрăçпа пăтратса формăна ярăр. Çиеле – сыр, çăмарта, ешĕл çимĕç хутăшне. Хăпартăва 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартса 40 минут тытăр.

Çимĕçе аш арманĕпе авăртнă какайпа е кăмпапа та хатĕрлеме юрать. Апачĕ тутлă пултăр!

## «Лаура» салат

**Çимĕçе хатĕрлеме 500 грамм краб патакĕ, пĕçернĕ 4 çăмарта, 1 кĕленче консервланă симĕс пăрça, темиçе маринадланă хăяр /хăвăра кирлĕ чухлĕ/, 2-3 панулми тата майонез кирлĕ.**

Краб патакĕпе хăяра вĕтĕ турăр. Çăмартапа панулмие теркăпа хырăр. Пур çимĕçе те хутăштарса майонезпа пăтратăр. Салата вĕтетнĕ сухан тата хăяр хушма юрать.

**ИЛЕМ КĔТЕСĔ**

# Усăллă маскăсем

**Çуркунне чылай чухне тĕрлĕ сăлтава пула ӳт кушăрхать, хĕрелет, вистенет. Çакă сăн-пите те илемсĕрлетет. Кун пек чухне килте ансат мелпе хатĕрленĕ маскăсем пулăшĕç. Уйрăмах лапчăтнă сĕлĕ хăрпăкĕнчен хатĕрленисем усăллă. Хăш-пĕр рецептпа сире те паллаштаратпăр.**

**1-мĕш маска валли** 3 кашăк лапчăтнă сĕлĕ кĕрпи, 1 хутаç /пакетик/ салтак тӳми чейĕ, кăштах типĕтнĕ пĕтнĕк çулçи кирлĕ.

Чей хутаçне çурса салтак тӳмине тата ытти хатĕре янă савăта вĕренĕ шыв хушăр. Хутăш çăраличчен кĕтĕр. Ăшă маскăна хулăн сийпе пите сĕрĕр. 15 минутран ăна ӳт çинчен илĕр те лĕп шывпа çăвăр.

**2-мĕш маска валли** 2 кашăк лапчăтнă сĕлĕ кĕрпине вĕтетсе лăканă пĕр çăмарта шуррипе хутăштармалла та пите сĕрмелле. 15 минутран сĕт хушнă ăшă шывпа çумалла.

**3-мĕш маска валли** 1 кашăк йӳçĕтнĕ сĕте 1 чей кашăкĕ пылпа, çăвăн чухлех сĕлĕ çăнăхĕпе е лапчăтнă сĕлĕ кĕрпипе тата пĕр чĕптĕм тăварпа лайăх пăтратмалла. Пулнă хутăша питпе мăя 20 минутлăха сĕрĕр. Лĕп шывпа çăвăр.

**ХАМĂР ХУШĂРА**

# Ӳт корректорĕ. Мĕн вăл?



Пикесем яланах илемлĕ те илĕртӳллĕ пулма ăнтăлаççĕ. Çавна пулах косметикăпа та анлăн усă кураççĕ. Анчах унпа та тĕрĕс ĕçлеме пĕлмелле. Юлашки вăхăтра çутçанталăк панă илемлĕх тата черченлĕх модăна кĕчĕ. Чи кирли – çакна палăртасси. Визажистсем ăна «косметикăсăр макияж» теççĕ. Çакăн йышши макияж тунă чухне чи кирлĕ япаларан пĕри – пит корректорĕ, консилер. Вăл ӳт çинчи пĕчĕк кăлтăксене, пăнчăсене пытарма тата ӳте пĕр тĕслĕ тума пулăшать.

Корректор темиçе тĕрлĕ пулать: крем, кăранташ евĕрли тата ытти те. Тĕсĕ те вĕсен тĕрлĕрен. Кашни тĕс уйрăм пăтăрмахран хăтăлма пулăшать. Сăмахран, хĕрелнĕ ӳте /аллерги, шатра, купероз, юн тымарĕсем палăрни/ симĕс тата ӳт тĕслĕрех сарă тĕслĕ консилер сĕрмелле.

Тĕксĕм пигмент пăнчисене, куç айĕнчи кăвак тĕсе кĕрен тата сарă тĕслĕ корректорпа сĕрсе хуплама пулать.

Хуратут /куктĕрри//веснушки/ ӳтлисене шурă тĕслĕ консилер пулăшĕ.

Асăрханмасăр шăйăрттарнă вырăна, пĕчĕк сурана хĕрлĕ-сарă тĕслĕ корректор сĕрмелле.

Хĕвелпе хĕртĕнсе хăмăрланнă ӳтри çутă пăнчăсене хăмăр тĕслĕ, сарă пăнчăсене вара сирень тĕслĕ корректорпа сĕрсе хуплама юрать.

Мероприятие е уява кайма хатĕрлентĕр-тĕк пите кĕрен сĕмлĕрех консилер е крем /тональный крем/ сĕрĕр. Ун чух электричество лампи çутинче ӳт илемлĕ курăнĕ. Хĕвеллĕ кун урама тухнă чухне вара ылтăн тата сарă тĕслĕ корректорпа усă курăр.

Çак косметика хатĕрĕн тĕксĕм е çутă тĕсĕсем пулăшнипе питри хăш-пĕр пайсене пытарма е палăртма пулать. Тĕксĕммине, сăмахран, пит шăммине, тăнлав тĕлне сĕрме сĕнеççĕ визажистсем. Çутă тĕслине вара – çамка варрине, куç айне, тута çийĕн тата янах варрине.

Консилерпа ĕçлеме пуçличчен кашниччех ӳте нӳрĕклетекен крем сĕрмелле. Корректорпа ытлашшипех усă курмалла мар, ăна пăнчă е шатра тĕлне тĕксе пӳрне вĕçĕпе çемçен пуса-пуса тирпейлемелле.

Çак темиçе ансат правилăна пăхăнсан илемлĕ макияж тума пулатех. Анчах та астăвăр: кирек мĕнле косметика хатĕрĕпе кирлĕ чухлĕ çеç усă курмалла.

Антип НИКОЛАЕВ

# ПАТТĂРСЕН ÇЕМЙИ

*(Малалли. Пуçламăшĕ 13-16-мĕш номерсенче.)*

**Григорий АЛЕКСЕЕВ**



*Вăрçăччен вăл Иваново облаçĕнчи вăрман хуçалăхĕнче, кайран милици органĕсенче ĕçленĕ. Тăван шăллĕ Иван килни çинчен пĕлсен, хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. Хăюллă артиллерист нумай çапăçусене хутшăннă, икĕ хутчен аманнă. Днепр урлă каçнă чухне тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.*

## Пĕрремĕш хут

Григорий Алексеев службăна запасри полкра пуçланă. Çамрăк салтаксем кунĕ-кунĕпе çапăçу техникине вĕреннĕ. Паян тесен паян, алла пăшал тытса, Тăван çĕршыва сыхлама хатĕр тăнă вĕсем.

Григорий танкист пулма ĕмĕтленнĕ, анчах ăна артиллери полкне янă. Артиллерист пулнишĕн те вăл савăннă, мĕншĕн тесен ĕмĕртен-ĕмĕре кун пек çарсене «вăрçă турри», теççĕ. Артиллеристсене ытларах уйра вĕрентнĕ. Тăтăшах инçе походсене çÿренĕ, вăрманлă-шурлăхлă вырăнсенче çапăçма хăнăхнă. Анчах никам та çăмăл служба, çăмăл çĕнтерÿсем çинчен шухăшламан.

Нимĕç фашисчĕсем Мускав патне талпăнаççĕ. Гитлер урса кайсах сухăрашать: Хĕрлĕ Çара çĕмĕрсе тăкнă, вăл нихăçан та ура çине çĕкленеймест имĕш. Çавнашкал пакăлтатнине никам та ĕненмен. Совет воинĕсем Тăван çĕршывăн тĕп хулине, пĕр çын пек кар тăрса, хăюллăн хÿтĕленĕ, тăшмана арккатмаллах пырса çапма хатĕрленнĕ.

Шăп çак вăхăтра Калинин фронтне Григорий Алексеев службăра тăракан артиллери полкĕ пырса çитнĕ. Григорий – вăтам пÿллĕ, тĕреклĕ арçын – ун чухне вăтăр сакăр çул тултарнă. Çапах та халиччен фронтра пулса курман-ха, çар ĕçне пĕлсех каяйман. Унăн куçĕнче хаярлăх. Вăл тăшмана Иваншăн, ишĕлсе пĕтнĕ хуласемпе ялсемшĕн, совет çыннисен юнĕшĕн тавăрма тупа тунă.

Вĕсен батарейи тÿрех, пĕр пысăках мар сăрт çине вырнаçса, çапăçăва хатĕрленме пуçларĕ. Сулахайра – шоссе, умра – пысăк уçланкă, сылтăмра – вăрман. Унта пирĕн пехотинецсем пытанса ларнă. Вĕсене тăшман танкĕсенчен хÿтĕлемелле. Çакă ĕнтĕ Григорий Алексеевăн, мĕнпур артиллеристсен пĕрремĕш тивĕçĕ.

Темиçе сехет хушши сăрт çинче лумсемпе кĕреçесем туплаттарни илтĕнсе тăчĕ: танксене хирĕç кĕрешекен батарея çапăçăва хатĕрленчĕ.

Взвод командирĕ Латышев лейтенант кашни шăтăка тĕплĕн тĕрĕслерĕ.

– Вăя ан шеллĕр, юлташсем! Çак сăрта пирĕн лайăххах çирĕплетмелле.

Сасартăк айлăмра танксем курăнса каяççĕ. Вĕсен хыçĕнче – тăшман салтакĕсем.

Унччен те пулмарĕ, юнашарах пĕр снаряд ÿксе çурăлчĕ. Тепри, виççĕмĕшĕ... Пирĕн тупăсем хирĕç чĕнмерĕç.

«Пеме приказ памашкăн йывăр-шим ĕнтĕ?» – шутларĕ Григорий. Расчет командирĕ те, ытти артиллеристсем те, хумханнине пытармасăр, батарея командирĕ еннелле пăха-пăха илчĕç. Взвод командирĕ те çакна сисрĕ.

– Ан пăшăрханăр, юлташсем, – терĕ Латышев, – пирĕн комбат васкамасть, анчах ĕçе тĕплĕ тăвать.

Тĕрĕссине каларĕ иккен лейтенант. Нимĕç танкĕсем çывăхарах çитсен, пурте комбатăн хулăн сассине илтрĕç:

– Огонь!

Çапăçу пуçланчĕ. Акă, свастикăллă танксенчен пĕри чыхăнчĕ, тепри айккинелле пăрăнчĕ.

– Огонь! Огонь! – команда хыççăн команда парать Соколов сержант. Хăй вара чунтан ĕненсе шухăшлать: «Çук, пирĕн позицисем урлă иртеймĕç нимĕç танкĕсем!»

...Пĕрремĕш çапăçу. Шкулти пĕрремĕш кун пекех, заводра е хирте ĕçлеме пуçланă пĕрремĕш кун пекех яланлăхах асра юлать вăл. Шăпах кунта, Мускав патĕнче, Григорий Алексеев пĕрремĕш хут вăрçă тути-масине тутанса пăхрĕ. Çакăнтах аманнă, анчах вăл çапăçуран тухман.

## Днепр, днепр...

13-мĕш Армин Çар совечĕн членĕ М.А.Козлов генерал-лейтенант, Днепр çинчи мухтавлă çапăçусене аса илсе, çапла çырнă:

«Пирĕн çарсем гитлеровецсене Курск патĕнчи çапăçусенче çапса аркатнă хыççăн нимĕç фашисчĕсен пĕтĕм фронт тăршшĕпех хÿтĕленме тивнĕ. Тăшман çĕнĕрен те çĕнĕ оборона линийĕсем тума тăрăшнă. Вăл уйрăмах Днепр шывĕ хĕррипе калама çук çирĕп вырнаçса ларнă. Темĕнле пулсан та совет воинĕсем тăшмана пĕр чарăнмасăр хăваланă. Гитлеровецсене хăйсен чи лайăх дивизийĕсене илсе килни те, фюрер урса кайса кăшкăрашни те пулăшман. 1943 çулхи сентябрь пуçламăшĕнче совет çарĕсем, Днепр урлă каçса, унăн сылтăм çыранĕнче нумай-нумай плацдарм туса хунă...»

...Днепр хĕррине Григорий Алексеев службăра тăнă артиллери дивизийĕ те тухнă.

Разведка пĕлтернĕ тăрăх, çыранăн сулахай енче нимĕçсем пулман: сылтăм енче вара мĕнпур майсемпе оборонăна хатĕрленнĕ: траншейăсемпе окопсем чавнă, дзотсем купаланă, уй-хирсене минăсем лартса тухнă, пиншер метр йĕплĕ пралук карнă...

Пĕр ирхине батарея командирĕ Лещенко лейтенант Алексеевпа пĕрле, кунти вырăнсене пăхса çаврăнас тесе, çывăхри хăвалăха кĕчĕç.

Комбат сарăхма пуçланă çулçăсене аллипе сирчĕ те Днепр çине тинкерчĕ. Тарăн шухăша путрĕ вăл. Григорий çакна асăрхарĕ, анчах командира нимĕн те каламарĕ.

Вĕсен умĕнче, пĕрне-пĕри ăмăртмалла пек хăваласа, хумсем чупаççĕ, çырана çапăнса кăпăкланаççĕ, хăйăра сиреççĕ, чулсене якатаççĕ. Çакă Григорий Алексеева хăй çуралса ÿснĕ тăван кĕтесе, Муркаш уй-хирĕсене, аслă Атăла аса илтерчĕ. Пурте чĕрешĕн хаклă, пурте çывăх. Анчах сĕмсĕр тăшман юнлă аллипе Тăван çĕршыва пăвма тăчĕ-çке-ха. Çук, пăваймĕ, парăнтараймĕ!

Çыранăн тепĕр енне тинкернĕ лейтенант сасси сасартăк шухăша татрĕ:

– Гриша, мĕн шухăшлатăн – юханшыв урлă каçма пултаратпăр-и?

– Пултаратпăр, – шанчăклăн тавăрчĕ Алексеев.

– Тĕрĕс ку! Халĕ кашни сехет хаклă: вăхăт ытларах иртсен, нимĕç çирĕпрех вырнаçĕ, çапăçма та йывăртарах пулĕ.

Салтаксен кăмăлне батарея командирĕ лайăх пĕлет, апла пулин те вăл, хăйне тĕрĕслес шутпа, çапла ыйтрĕ:

– Салтаксем мĕн калаçаççĕ? Чăтма çук ывăннă, çапла-и? Пĕлетĕп. Днепр урлă каçасси çинчен мĕн шутлаççĕ-ши?

Алексеев тÿрех тавăрчĕ. Ку кăштах лейтенанта тĕлĕнтерчĕ те. Вăл салтакăн уçă та ырă кăмăлă питĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

Комбат шăтарасла пăхнăран Григорий аванмарланса кайрĕ, унтан вăрахăн, кашни сăмаха тĕплĕн шухăшласа калама пуçларĕ:

– Ывăнасса, паллах, ывăннă. Мускав патĕнчен çакăнта çити çуран утса килнĕ...

– Салтаксем, салтаксем мĕн шутлаççĕ? – çине тăрсах ыйтрĕ лейтенант. Çав вăхăтрах хăйĕн картти çине темĕнле паллăсем турĕ.

– Мĕн каласси пур! Парăн, Берлин, – ĕçĕ те пĕтнĕ! Акă мĕн калаççĕ салтаксем. Эсир, лейтенант юлташ, хăвăрах пĕлетĕр батарейăра мĕнле çынсем иккенне. Хыçа юлни – хыçрах ĕнтĕ, ĕмĕт – малалла!

– Парăн, Берлин! Калама çăмăл, – кулкаласа илчĕ офицер. Унтан çамкине пĕркелентерчĕ. – Пулнă эпĕ ку вырăнсенче.

Вăл ура çине çĕкленчĕ. Тăшман ан асăрхатăр тесе, пĕшкĕнсе, çыран тăрăх утса кайрĕ. Майĕпен, васкамасăр утать вăл. «Тем çинчен шутлать», – тавçăрса илчĕ Алексеев, ун хыççăн пыраканскер.

Çапла, командир шухăша путнă. Днепр ăна иртнисене аса илтерчĕ. Кунта, çак анлă çырансем çинче, вăл службăра тăнă. Тактикăлла вĕренĕве темиçе хут та тухнă, Днепр урлă каçнă, наступление кайнă, хÿтĕленнĕ, «тăшмана» йĕрленĕ. Анчах ун чухне вĕренÿ çеç пулнă. Халĕ – вăрçă. Хаяр вăрçă...

Пĕр çĕр метр кайсан, Лещенкăпа Алексеев çĕнĕ вырăнтан сăнама тытăнчĕç. Тĕмсем çÿллех мар – чĕркуçленме тиврĕ. Григорий офицерпа юнашар ларчĕ те калаçăва малалла тăсрĕ:

– Салтаксем Днепр урлă тÿрех, чарăнса тăмасăрах, каçмалла, теççĕ. Юн та сахалтарах тăкăнĕ.

– Тĕрĕс калаççĕ.

– Лейтенант юлташ, кунта, сулахай çыранта, çуркуннеччен кĕтсе ларма хушсан, мĕн тăвăпăр?

– Ман шутпа ун пек пулмасть. Наступление çĕкленмелле пирĕн. Пĕр кун кĕтмесĕрех – наступление!

Салтак куçĕ хаваслăн çиçсе илчĕ.

– Илтетĕр-и? Юрлаççĕ, – терĕ вăл командира. – Епле çĕкленÿллĕ кăмăлтуйăмпа шăрантараççĕ.

Батарея вырнаçнă ращаран юрă илтĕнсе кайрĕ. Унта çитме пĕр çĕр метр ытла мар. Çав раща халĕ Григорие питĕ илĕртет. Унта – унăн юлташĕсем, вĕсемпе пĕрле пулас килет. Анчах командир адъютанчĕ аманнă, ун вырăнне вăхăтлăха – Григорий.

Юрă çил хумĕпе çăмăллăн вĕçсе килет:

> Ой, Днепро, Днепро,
> ты широк, могуч.
> Над тобой летят журавли...

Çав вăхăтра сылтăм çыранта тăшман, сулахай енче пирĕннисем вăй пухаççĕ. Малти подразделенисем юханшыв хĕррипе командовани палăртнă вырăнсене йышăнаççĕ.

> Каллех юрă:
> Ой, Днепро, Днепро,
> ты широк, могуч.
> Над тобой летят журавли...

Лещенко, юрă сăмахĕсене тăнланă май, çапла хушса хучĕ:

– Тăрнасем мар, часах ăмăрткайăксем вĕçсе каçĕç сан урлă, Днепр! Çапла-и?

– Паллах, лейтенант юлташ! Пирĕн батарейăра пурте харсăр артиллеристсем – чăн-чăн ăмăрткайăксем.

Çак калаçăва комбат кайран, каçхине, тепĕр хут аса илчĕ.

Вăл салтаксене йĕркеленсе тăма хушрĕ. Ун умĕнче тусанланнă тумтирлĕ ывăннă салтаксем, анчах пурте çирĕп кăмăллă та хăюллăскерсем, çĕнтерÿшĕн тем тума та хатĕр боецсем тăраççĕ. «Вĕсем нимрен те хăрамаççĕ», – шухăшларĕ офицер.

Салтаксем командира тимлĕн итлерĕç. Приказ: вăрман касмалла, сулăсем тумалла, шыв урлă каçма хатĕрленмелле.

Хĕрÿ ĕç пуçланчĕ. Таçтан икĕ пушă пичке тупрĕç. Салтаксем автомобиль урапин камерисене вĕрсе хăпартрĕç. Унччен те пулмарĕ хăмăш хушшинче икĕ кимĕ тупăнчĕ, тепĕр самантрах темиçе сулă майлаштарчĕç те.

Çĕрлене пурте хатĕр. Днепр çийĕн тачка пĕлĕтсем шăваççĕ. Пĕлĕт таткисем хушшинчен тепĕр чухне уйăх курăнкалать.

Уйăх пысăк пĕлĕт айне хупласан, пĕрремĕш взвод çыран хĕрринчен хускалчĕ. Анчах пĕлĕт уçăлчĕ те, уйăх сиксе тухрĕ.

Сылтăм çыранта – сывлăш çурăлса кайрĕ тейĕн – тупăсем кĕрĕслеттерме тытăнчĕç. Акă, пĕр снарячĕ сулă умнех ÿксе шартлатрĕ. Сасартăк Григорий аса илчĕ: кăнтăрла тăвансем патне çыру яма ĕлкĕрейменччĕ вăл. Ашшĕ-амăшĕпе фронтри шăллĕсем патне çырас тенĕ çĕртех çыраймарĕ. Ялан вăхăт çук. Халĕ те акă паллă мар: хăçан çырĕ, тен, çыраймĕ те. Ав, мĕнле ăшталантараççĕ фрицсем.

Сулă çинче сулланкаласа тăнă май Григорий ракета çутине сăнарĕ: «Сÿн хăвăртрах, мур илесшĕ!» Ракета вара çакăнса тăнă та тăрать тÿпере. Юнашарах тепĕр снаряд ÿкрĕ, тепре. Григорий те, унăн юлташĕсем те кĕсменĕсемпе хĕрсе кайсах тăрмашаççĕ, çапах та сулă питĕ ерипен шунă пек туйăнать, кун пек ишсен, ир енне те çырана çитес çук пек.

Сутă вăйсăрланса пычĕ, часах сÿнсе ларчĕ. Уйăх та пĕлĕт айне пытанчĕ. Халĕ ĕнтĕ шыва такам хура кĕрĕкпе хупланă пекех туйăнса кайрĕ. Анчах ăш вăркать-ха, шиклентерет. Йĕри-таври шыв, тарăнăшĕ те тем пекех пулĕ-ха! Пĕр-пĕр осколок е пуля лекрĕ-тĕк – сывă пул, çут тĕнче! Çук, ăнсăртран вилес марччĕ-ха! Çирĕпрех тыт хăвна, çирĕпрех, ан авăн, ан хăра! Хăвăртрах ишмелле, хăвăртрах!

Тÿпере тÿрех виçĕ ракета çуталчĕ. Паçăр снарядсем сулă патне ăнсăртран çеç ÿккеленĕ пулсан, – халĕ ĕнтĕ гитлеровецсем шăпах артиллеристсене тĕллесе переççĕ.

Пулемет антăхса кайсах такăлтатать. Григорий тавра та пульăсем ытларах та ытларах шăхăрма тытăнчĕç. Акă вăл ăçта – вилĕм çири кĕперен те çывăх тени!

«Эсĕ мĕн, хăраса ÿкрĕн-им?» – хăйне хăй вăрçса илчĕ Алексеев. Çак ыйту Григорие урăлтарса янăнах туйăнчĕ. Пурте хăй вырăнне ларчĕ. Нимĕçсем переççĕ – печчĕрех, унăн вара пуля айне лекмелле мар. Хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле унăн Днепрăн сылтăм çыранĕнче плацдарм тытса илмелле, çав плацдарма ытти подразделенисем валли анлăлатмалла.

Сулă пусĕ çырана пырса тăрăнчĕ. Салтаксем шыва сикрĕç те хăйсен «хĕрĕх пиллĕкмĕшĕсене» типĕ çĕр çине кăларма васкарĕç. Çав вăхăтрах тепĕр сулăпа каçнă автоматчиксем, «урра» кăшкăрса, тăшман позицине атакăлама тытăнчĕç. Гитлеровецсен траншейисенче хаяр çапăçу пуçланчĕ.

**(Малалли пулать).**

# Хаваслă 2015 самант

## «Асамлă химиӗ»

| | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| В | О | Д | О | Р | О | Д | А | У | Г | Л |
| К | С | А | Р | И | Л | Б | О | Р | Р | Е |
| К | Е | Р | Т | А | И | М | А | Г | О | Д |
| А | Т | Н | А | И | Т | К | А | Н | И | Л |
| Л | И | О | Л | Ф | Т | О | Л | А | Л | Ю |
| Ь | Ц | В | О | Н | Е | Р | И | Н | И | М |
| М | Т | О | А | З | О | Н | Н | И | Ф | И |
| А | Ц | И | Т | О | Р | Т | А | Д | О | С |
| Р | К | Н | Ш | Ь | Т | И | И | О | О | Ф |
| Г | А | М | Ы | Я | К | И | М | Х | Р | З |
| А | Н | Е | Ц | О | К | А | Д | Л | О | Р |

Хими элеменчӗсене тупса йӗрле. Сăмахсем пӗр-пӗрне касмаççӗ тата таткăлмаççӗ, анчах «хуçăлма» пултараççӗ. Пӗр тӗслӗхне кăтартнă та ӗнтӗ. Юлнă саспаллисенчен химиреакцине хăвăртлатакан япала вуланать. Мӗн-ши вăл?

## Сăмах хоккейӗ

| | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| в | а | в | ă | й | у | к | е | н | г | ш | щ | з | х | л | ъ | ф | ы | в | а | п | р | о | л | д | ж | э | я | ч | с |
| г | л | л | й | ц | и | м | и | р | т | ь | б | ю | ё | а | е | й | ц | у | к | с | у | т | к | а | к | и | н | в | и |
| ш | н | з | ю | е | н | к | е | г | ă | ш | щ | з | х | м | ъ | к | ф | ы | к | в | а | д | а | н | т | и | с | т | м |
| н | о | с | п | м | р | д | с | о | л | с | д | ж | э | а | я | ч | ё | а | с | м | о | и | т | ь | б | ю | а | й | о |
| н | ё | г | о | ц | и | у | к | ь | и | п | о | к | с | е | л | е | т | й | к | р | е | н | г | ш | л | л | щ | з | т |
| т | д | ц | х | с | ъ | н | ф | р | л | л | ы | т | в | а | п | р | о | л | о | д | л | ж | э | у | а | э | я | ч | а |
| и | щ | ы | ч | с | м | и | и | т | ь | о | ă | б | ю | ё | й | ц | у | д | к | н | е | н | т | н | н | г | ш | щ | н |
| м | с | а | н | у | т | м | ă | р | ă | в | к | з | х | ъ | в | ф | о | ы | о | в | а | й | т | п | т | р | о | ш | а |
| у | л | д | с | ж | э | я | ч | с | ă | м | и | и | т | ь | б | в | ю | х | ё | ӳ | а | ă | ё | й | ă | ц | к | н | г |
| р | ă | м | ӳ | а | м | п | н | м | ё | ю | ь | р | н | | | л | р | д | о | п | л | ш | р | б | ш | ă | м | ă | у |
| а | а | н | р | а | в | о | б | а | ç | м | а | с | а | | | о | р | д | а | л | е | к | ё | ь | л | о | ӳ | т | б |
| д | ё | х | ӳ | а | н | а | т | р | у | и | п | ă | й | у | э | л | л | а | д | а | у | р | р | п | п | ӳ | р | т | а |
| и | ç | у | к | й | ă | ç | в | и | л | ф | е | н | ё | й | т | г | в | и | р | н | т | ă | х | й | х | а | т | ă | л |
| х | л | и | л | л | е | в | а | н | х | л | ă | х | р | ă | н | а | ӳ | г | р | о | а | у | л | ӳ | н | ӳ | п | к | е |
| ё | э | и | р | л | е | г | н | а | е | а | й | х | и | х | т | и | о | з | а | в | р | г | ь | е | н | у | ц | в | о |
| в | л | и | а | т | р | г | о | а | а | в | й | а | с | ă | л | н | ш | е | к | а | и | о | т | п | а | д | ă | р | л |
| е | я | й | т | д | а | о | р | с | у | м | ь | с | е | й | и | н | р | о | с | к | с | а | ç | м | р | а | ç | л | ё |
| л | м | а | й | д | а | н | т | л | п | ă | а | и | й | м | к | ы | т | у | п | н | к | в | ӳ | т | а | в | ӳ | о | ç |
| о | ç | ы | н | х | ч | е | с | а | а | к | л | л | ф | а | у | в | л | о | к | о | м | о | т | и | в | я | ё | г | ӳ |
| р | а | к | а | с | т | р | а | н | н | а | а | а | в | е | л | о | с | и | п | е | д | и | с | т | т | ё | р | ё | к |

**I**.1. «Хыпар» хаçат пуçаруçи. 2. Сурхури уявӗнче мӗн çиеççӗ? 3. Д.И.Менделеев таблицинче 13-мӗш вырнаçнă хими элеменчӗ. 4. Чечек те, канфет та. 5. Чăваш Енри юханшыв. 6. Пахча çимӗç. 7. Радиотелеграф çыхăнăвӗ урлă пулăшу ыйтни. 8. Ӗне кунсеренех мӗн парать? 9. Вăл хăйӗн командипе пӗрле ватă çынсене пулăшса çӳренӗ. 10. 88-мӗш хими элеменчӗ. 11. Гомерăн эпикăлла поэми. 12. Килӗшнине пӗлтерекен хурав. 13. Пахчари «çăлтăр». 14. Космонавт /син./. 15. Лаша «ачи». 16. Чăваш халăх сăвăçи, вырăс поэзийӗн сюрреализмне йӗркелекенӗ. 17. Шыв динозаврӗ. 18. Дагестан халăх поэчӗ Гамзатов. 19. Футбол клубӗ. 20. Калта тӗсӗ. 21. Ял хуçалăх продукцине упрамалли вырăн. 22. Красноармейски районӗнчи Сурăмхӗрри Карайӗн паттăрӗ, Искей ывăлӗ. 23. Май уйăхӗнче çеçке çуракан чечек. 24. Скелет пайӗ.

**II**.1. Шыв тытăмӗнчи хими элеменчӗ. 2. Шăл кăларакан. 3. Турă панă пултарулăх. 4. Пир татăкӗ çине тунă эреш. 5. Пушкăртстан тӗп хули. 6. Этемӗн, чӗрчунăн, кайăкăн тата хăшпӗр пулăн сывлав системинчи тӗп орган. 7. Тутарстанри хула. 8. Этем кӗлеткин тытăмне вӗрентекен биологи пайӗ. 9. Вăрнар районӗнчи Çавалкасси ялӗнче çуралнă сăвăç-лирик. 10. Компьютер пӳлӗмӗнчи чечек. 11. Тинӗсре тата океанра пурăнакан «электричествăллă» пулă. 12. Çăлтăрсене сăнамалли прибор. 13. Узбек халăхӗн тӗп апат-çимӗçӗ. 14. Çулла канăç паман «вампир-хурт-кăпшанкă». 15. Вăрăм шăлсем. 16. Чăваш эстрадинчи амăшӗпе хӗрӗ – Алинăпа Ангелина.

**III**.1. Монголири юханшыв, ун çывăхӗнче тӗрӗк çырулăхӗн паллисене тупнă. 2. Пӗтӗм тӗнчене шыв илнӗ чухне вăл кашни чӗрчунăн пӗр мăшăрне карап çине лартса кайнă та пӗтесрен çăлса хăварнă. 3. Юман çимӗçӗ. 4. Тӗве тӗсӗ. 5. Мӗн çинчен те пулин аса илни. 6. 20-мӗш ӗмӗрти паллă поэтсенчен пӗри ... Цветаева. 7. Болгари литераторӗ тата çыравçи ... Тодоров. 8. Симӗс лимон. 9. Раççейӗн кăнтăр енчи тата Украинăри пасар вырăнӗ. 10. 11-мӗш хими элеменчӗ. 11. Чăваш Республикин гимн сăввине çыраканӗ ... Тукташ. 12. Пăр кайни. 13. Тăмана йышши кайăк.

## «Юлташ патне шăнкăравла»

| | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | 4 | 1 | 6 | 1 | 0 | | | | | |
| 2. | 8 | 1 | 5 | 4 | 1 | 6 | 8 | | | |
| 3. | 4 | 7 | 6 | 1 | 4 | | | | | |
| 4. | 8 | 1 | 5 | 1 | | | | | | |
| 5. | 8 | 1 | 4 | 1 | 4 | | | | | |
| 6. | 6 | 1 | 7 | 1 | 5 | | | | | |
| 7. | 7 | 7 | 6 | 8 | 4 | 1 | | | | |
| 8. | 8 | 2 | 4 | 2 | 6 | | | | | |
| 9. | 4 | 7 | 4 | 4 | 7 | 4 | | | | |
| 10. | 6 | 2 | 6 | 6 | 3 | | | | | |
| 11. | 7 | 4 | 1 | 6 | 1 | 4 | 4 | 1 | | |
| 12. | 7 | 3 | 1 | 5 | | | | | | |
| 13. | 5 | 1 | 6 | 8 | 1 | 4 | 1 | 5 | | |
| 14. | 1 | 6 | 1 | 5 | | | | | | |
| 15. | 6 | 1 | 6 | 5 | 1 | | | | | |
| 16. | 8 | 1 | 6 | 4 | 1 | 5 | | | | |
| 17. | 4 | 1 | 1 | 1 | 4 | 1 | 6 | 8 | 1 | 5 |
| 18 | 4 | 1 | 6 | 1 | 8 | | | | | |
| 19. | 6 | 1 | 4 | 1 | 5 | 1 | | | | |
| 20. | 7 | 7 | 2 | | | | | | | |
| 21. | 6 | 2 | 4 | 2 | 6 | 4 | 2 | 4 | | |
| 22. | 1 | 4 | 1 | 6 | 6 | 4 | 1 | 3 | 1 | 4 |
| 23 | 7 | 7 | 6 | 4 | 1 | 3 | 1 | 4 | | |
| 24. | 1 | 4 | 1 | 8 | | | | | | |

| | | |
|---|---|---|
| 1 АĂБВ | 2 ГДЕЁ | 3 ЖЗИЙ |
| 4 КЛМ | 5 НОП | 6 РСÇТ |
| 7 УӲФХ | 8 ЦЧШЩ | 9 ЪЫЬ |
| | 0 ЭЮЯ | |

Çак телефон пускăчӗсем çине цифрăсем çеç мар, саспаллисем те çырнă. Кашни цифрăпа темиçе саспалли килӗшсе тăрать. Тӗслӗхрен «АТĂЛ» сăмах пултăр тесен 1, 6, 1, 4 пускăчсене пусмалла. Çакăнта çырнă сăмахсене /кайăк ячӗсене/ туп. Пӗтӗмпех тӗрӗс тусан палăртнă тăваткалсенче тӗп сăмах вуланать.

## Хăвăн пӗлӗвне тӗрӗсле

**Санăн умра – çирӗм ыйту. Вӗсенчен хăшӗ-пӗрин темине шкул программинчен илнӗ. Ыйтусем çине эсӗ хăв тӗллӗнех хуравлама пултаратăн. Аçу-аннӳпе е юлташусемпе тупăшу йӗркелеме те юрать. Камăн тӗрӗс хуравӗ чи нумайи, çав çӗнтерет.**

**1. Çӗр çинчи чи пысăк кӳлӗ:**
а. Ладога кӳлли
ă. Байкал
б. Танганьика

**2. Чиполлино ашшӗн ячӗ:**
а. Чиполлето
ă. Чиполлоне
б. Чиполлото

**3. Тӳркӗтеслӗхӗн пур енӗн сумми:**
а. периметр
ă. радиус
б. медиана

**4. «Арçури» баллада авторӗ:**
а. К.В.Иванов
ă. М.Ф.Федоров
б. И.Я.Яковлев

**5. Тутарстан тӗп хули:**
а. София
ă. Пӗкӗлме
б. Хусан

**6. Ӳкепе те сывлама пултаракан пулă:**
а. Уланкă
ă. Рогозуб
б. Скат

**7. «Шӗшкӗ» юмах авторӗ:**
а. Иван Мучи
ă. Трубина Мархви
б. Ăсан Уçăпӗ

**8. Нарспи упăшки:**
а. Тăхтаман
ă. Сетнер
б. Сентти

**9. Çӗр «юлташӗ»:**
а. Марс
ă. Уйăх
б. Венера

**10. Хăш сăмахра йăнăш янă?**
а. калча
ă. чиперке
б. пахча çимӗç

**11. Пирӗн планетăри чи пысăк чӗрчун:**
а. носорог
ă. жираф
б. кăвак кит

**12. Торнадо вăл:**
а. çаврăнса тăракан сывлăш юпи, аслати пӗлӗтӗнчен пуçласа çӗре çити тăсăлать
ă. лăпкăлăх
б. тинӗс çинче çил çукки

**13. Хăш сăмахра йăнăш янă?**
а. мунча
ă. пюрт
б. кăркка

**14. 1000000000000 хисеп:**
а. триллион
ă. миллион
б. миллиард

**15. И.Ахратăн «Юрлакан кӗленчесем» калавӗнче Петюка музыка шкулне илӗртекен композитор:**
а. Федор Павлов
ă. Петр Чайковский
б. Герман Лебедев

**16. Танка сăвă виçинче миçе йӗрке?**
а. пиллӗк
ă. виççӗ
б. вуниккӗ

**17. «Кӗлпук мучи» авторӗ:**
а. Ухсай Яккăвӗ
ă. Денис Гордеев
б. Петӗр Хусанкай

**18. Çӗр çинчи чи çӳллӗ курăк:**
а. хăях
ă. бамбук
б. хăмăш

**19. «Тытман упа ... сӗвеймӗн»:**
а. тирне
ă. чӗрнине
б. хăлхине

**20. Хӗвел системинчи чи пысăк планета:**
а. Юпитер
ă. Сатурн
б. Венера

Лариса ПЕТРОВА (тел. 56-11-80) хатӗрленӗ.